*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЮН КУН

76 (2488) 1
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2014,
юпа, 1

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

**Хисеплĕ пенсионерсем, вăрçă тата ĕç ветеранĕсем! Сире Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕ ячĕпе саламлатăп!**

Çак уяв Тăван çĕр-шыв ырлăхĕшĕн тăрăшса ĕçленĕ, хайсен паха опытне тата пурнăçри ăсне çамрăксене паракан аслă ăру çыннисем çине патшалăх уйрăмах тимлĕн пăхнине çирĕплетсе парать.

Ватă çынсене пурăнма лайăх майсем туса парасси – власть органĕсемпе обществăн тĕп тĕллевĕ. Чăваш Республикинче ăна пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен нумай профильлĕ учрежденисен тытăмĕ Чăваш Енре пурăнакан ватăсене кирлĕ пек пулăшу пама май парать, çавнашкал пулăшу ĕçсен йышĕ тăтăшах анлăланать. 2014 çулта республикăри социаллă сферăна аталантарма 6,5 миллиард тенкĕ яма палăртнă.

"Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ" хисеплĕ ят туса хурасси çинчен йышăну çирĕплетнĕрен ĕç стажне кура Чăваш Енри 25 пин ытла пенсионер хăйсен ĕçне тивĕçлипе хакланине курса ĕненнĕ тата ветеран удостоверенийĕпе пĕрле социаллă çăмăллăх илмелли правăна тивĕçнĕ.

Пирĕн пенсионерсемпе ветерансем пурнăçри хастарлăхĕпе палăрса тăраççĕ, вĕсем тĕрлĕ спорт тата общество мероприятийĕсем йĕркелесе ирттереççĕ тата унта йышлăн хутшăнаççĕ. Республика команди кăçалхи çĕртме уйăхĕнче Шупашкарта иртнĕ Раççейри пенсионерсен пĕрремĕш спартакиадинче ăнăçлă ăмăртрĕ. Чăваш Енри 60 çултан аслăрах ўсĕмри 12 пине яхăн çын спортпа тăтăшах çыхăну тытать, çакă пурнăç тăршшĕне ўстерме пулăшать – 2011 çултан тытăнса 2013 çулччен республикăра ку кăтарту икĕ çула çити пысăкланнă.

Хаклă ветерансем! Сирĕн пурнăçри опытăр, кăмăл-сипет тата этемлĕх принципĕсем, чун тараватлăхĕпе тарăн ăсăр паянхи çамрăксене пурнăçа лайăххах пĕлсе çитме, ырă ĕçсем тума, обществăна усă кўме пулăшаççĕ.

Сире пурсăра та çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал, лайăх кăмăл тата, паллах, хăвăрăн тăванăрсем çывăх çыннăрсен юратăвĕпе тимлĕхне туллин туйма сунатăп!

**Михаил ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Ен Пуçлăхĕ.**

## КĔСКЕН

Авăн уйăхĕн 26-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Оренбургра РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕн полномочиллĕ представителĕ Михаил Бабич ертсе пынă Округ канашĕн ларăвне хутшăннă.

***

Мускавра пенсионерсен хушшинче компьютера алла илес тĕлĕшпе Пĕтĕм Раççейри ăмăрту иртнĕ. Унта Тăвай районĕнчи Тăрмăш вăтам шкулĕнчи Вячеслав Сидоров вĕрентекен «Работа с порталом государственных услуг» номинацире пĕрремĕш вырăна тухнă.

Ăмăртăва Раççейри 59 регионтан 130 ытла пенсионер хутшăннă. Çавăн пекех Бельгирен, Словакирен, Беларуçран, Казахстанран, Узбекистанран тата Абхазирен те. Çĕнтерўçе ваттисен кунĕнче «Раççей пенсионерĕсен союзĕн» вырăнти уйрăмĕнче числĕç.



Сăн ўкерчĕке www.cap.ru сайтран илнĕ

# Сĕт фестивалĕ

**ИРТНĔ ЭРНЕРЕ ШУПАШКАРТИ «НИКОЛАЕВСКИЙ» СУТУ-ИЛЎ КОМПЛЕКСĔНЧЕ СĔТ ФЕСТИВАЛĔ ИРТРĔ. КĂÇАЛХИПЕ ВИÇÇĔМĔШ ХУТ ЙĔРКЕЛЕНĔ ĂНА.**

Уява Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев уçрĕ. «Эпир, тавар туянакансем, сĕте ăстан кўрсе килнине, ăна кам хатĕрленине сутуçăран ыйтма тивĕç. Çавна май ăна суйланă чухне йăнăшмастпăрах». Экономика тĕлĕшĕнчен сĕт производствине аталантарма нумай çула ывакан инвестици кирлине палăртрĕ вăл. Сĕт туса илекенсене тата ăна тирпейлекенсене тав турĕ.

Сĕт туса илекенсен наци союзĕн правленийĕн ертўçи Андрей Даниленко Чăваш Ен паха сĕт юр-варĕпе палăрнине каларĕ. Халăх сывлăхĕшĕн тăрăшнăшăн республика ертўçине тав турĕ.

Михаил Игнатьев пĕр ĕнерен çулталăкне 7 пин ытла кг сĕт суса илнĕ операторсене числарĕ. Çавăн пекех ача-пăча конкурсне хутшăннă çамрăк ўнерçĕсене дипломпа тата парнепе хавхалантарчĕ.

Михаил Игнатьевпа Андрей Даниленко ЧР Министрсен Кабинечĕ тата Сĕт туса илекенсен наци союзĕ «Три молочных продукта в день» проекта пурнăçласси çинчен калакан килĕшĕве алă пусрĕç.

Фестивале кăçал сĕт тирпейлекен 8 предприяти хутшăннă. Уяв вăхăтĕнчех «çавра сĕтел» йĕркеленĕ.

Сăмах май, Чăваш Ен паянхи кун сĕт тирпейлекен 12 предприяти ĕçлет. Çулталăк пуçланнăранпа вĕсем пĕтĕмĕшле 111,1 пин тонна сĕт туяннă. 2014 çул пуçланнăранпа 79,8 пин тонна таса сĕт продукчĕсем туса кăларнă.

Уява пухăннисене кичем пулмарĕ. Тĕрлĕ конкурса хутшăннипе пĕрлех сĕт юрварне тутанса пăхма, хаклама, туянма май килчĕ. Çавăн пекех фестивальте тухтăрсемпе косметологсем усăллă сĕнўсем пачĕç. Сĕт юр-варĕпе мĕнлерех чиперленмеллипе паллаштарчĕç.

# «Апат-çимĕçсĕр юлмăпăр»

**Республикăра уй-хир пушанса пырать. Çавах хăш-пĕр тăрăхра ĕççи вĕрет. Çĕр ĕçченĕ кăшман, çĕр улми пуссинче тăрăшать. Хĕле хатĕрленсе ытти ĕçе пурнăçлать. Кăçалхи кăтартусем еплерех? Тухăçпа савăнма пулать-и? Апат-çимĕçпе хамăра хамăр тăрантарма пултаратпăр-и? Çакнашкал ыйтусене ЧР ял хуçалăх министрĕ Сергей ПАВЛОВ хуравлать.**

**– Сергей Владимирович, вырма ĕçĕсене республикăра чи малтан Елчĕк районĕ вĕçлерĕ. Ытти тăрăхра ĕç-пуç еплерех пырать-ши?**

– Район администрацийĕсен кăтартăвĕ тăрăх – кăçалхи авăн уйăхĕн 29-мĕшĕ тĕлне ял хуçалăх организацийĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем 259,6 пин гектар лаптăк çинчен тĕш тырă тата пăрçа йышши культурăсене вырса çапнă. Çакă 99,8 процентпа танлашать. Вырма ĕçĕсене 19 районта вĕçленĕ.

Пурĕ 567,5 пин тонна тыр-пул пухса илнĕ (иртнĕ çул 406,7 пин тонна). Вăтам тухăç – гектартан 21,9 центнер (2013 çулта – 18,2 центнер). Ку тĕлĕшпе ытларах Вăрнар (гектартан 27,3 центнер), Шупашкар (26,0 центнер), Етĕрне (26,2 центнер) районĕсем палăраççĕ. Чи сахал тухăç – Улатăр (14,7 центнер), Çĕмĕрле (17,3 центнер) районĕсенче.

**– Хальхи вăхăтра çĕр ĕçченĕсем çĕр улми, пахча çимĕç пуçтараççĕ. Çавăн пекех вылăх-чĕрлĕх апачĕ хатĕрлес тата кĕрхи культурăсем акас тĕлĕшпе тăрăшаççĕ. Палăртнă кăтартусем мĕнлерех-ши?**

– Авăн уйăхĕн 29-мĕшĕ тĕлне çĕр улмине 8,7 пин гектар лаптăк çинчен пуçтарса кăртнĕ (2013 çулта 5,98 пин гектар çинчен). Çакă пухса илмелли лаптăкăн 99,9 проценчĕ (2013 çулта 47,8 процент). Пĕтĕмĕшле кăтарту 143,2 пин тоннăпа танлашать. Вăтам тухăç – гектартан 163,7 центнер. Пахча çимĕçе 350 гектар çинчен пухса илнĕ. Пĕтĕмĕшле кăтарту – 7,9 пин тонна, тухăç – гектартан 226,9 центнер.

Хальхи вăхăтра хăш-пĕр хуçалăх силос валли куккурус вырать, сахăр кăшманĕ кăларать.

Кĕрхи культурăсене 88,8 пин гектар çине акса хăварнă (2013 çулта – 70,5 пин гектар). План тăрăх – ку ĕçе 88,9 процент (2013 çулта 70,6 процент) пурнăçланă. Кĕрхи культурăсене акас тĕлĕшпе çак районсем палăрнă: Комсомольски, Муркаш, Пăрачкав, Елчĕк. 130,4 пин гектар (2013 çулта 88,6 пин гектар) çинче çĕртме тунă.

Республикăра çавăн пекех вылăх апачĕ хатĕрлес ĕç малалла тăсăлать. Асăннă вăхăт тĕлне 88,9 пин тонна (планпа пăхнин 121,5 проценчĕ) утă, 693 тонна витаминлă курăк çăнăхĕ хатĕрленĕ, 210,4 пин тонна (136,7 процент) сенаж, 132,4 пин тонна (67,2 процент) силос хывнă. Условлă майракаллă шултра вылăх пуçне 24,6 центнер апат единици ( иртнĕ çул 22,7 центнер апат единици) хатĕрленĕ.

**– Вырма ĕçĕсене пурнăçлама яланах çын кирлĕ. Çав вăхăтрах, паллах, вăйлă техника та. Вăл хуçалăхсенче пур-и? Машина-трактор паркне пуянлатма мехел çитет-и?**

– Ял хуçалăх техникине çĕнетес юхăм хăвăртланчĕ: район администрацийĕсен кăтартăвĕсем тăрăх – 2013 çулта 200 трактор, тыр-пул пухса илмелли тата вылăх апачĕ хатĕрлемелли 87 комбайн туяннă. Пĕтĕмĕшле хак – 898,4 млн тенкĕ. Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта 93 трактор, тыр-пул пухса илмелли 43 комбайн тата вылăх апачĕ хатĕрлемеллине 15 единица 525,0 млн тенкĕлĕх илнĕ.

**– Çулсеренех Чăваш Енри пысăк хуласенче «Кĕр парни» уйăхлăх иртет. Паллах, хула çыннишĕн çав тери меллĕ вăл. Ентешсем хĕле валли çĕр улми, пахча çимĕç туянаççĕ. Ял хуçалăх таварĕ туса илекен те çак тапхăрта апат-çимĕç сутса тупăш курать.**

3-мĕш стр. ➔

Кӗр тутти

# Ампар ăшши – çулталăка

**Пуçлăхсем шукăль çӳренине курма хăнăхнăран-и, ĕç тумне тăхăннă, рабочисемпе пĕрле тар тăкакан Александр Клементьева ыттисенчен уйăрса та илеймерĕм. Уйхиртен машина-трактор турттаракан çĕр улмине суйласа управа хываççĕ, сутмалăх хатĕрлеççĕ. Ĕç вĕресе тăрать, шултра та таса çимĕçпе михĕсем хăвăрт тулаççĕ. Рабочисен ларса канма та вăхăт çук. Тулли техникăна тытса тăраймăн – уйра çĕр улми комбайнĕсем кĕтеççĕ. Кашни ĕç пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă. Пĕри чăхăмлани ыттисене ура хурать.**

**– Хĕрӳ тапхăрта мĕнле чун-чĕрепе кантурта чӳречерен пăхса ларăн? Манăн ĕç вырăнĕ – халăхпа юнашар, – терĕ ертӳçĕ.**

Хуçалăхри лару-тăрăва, çынсен шухăшкăмăлне витĕр курса-пĕлсе тăнăран вун пĕр çул Куславкка районĕнчи «Куснар» агрофирмăна ăнăçлă ертсе пырать вăл. Юлашки çулсенче хуçалăхăн усă куракан лаптăксем палăрмаллах пысăкланнă. Кăçал пĕрчĕллĕ тата пăрçа йышши культурăсене 2 пин гектар çинче çитĕнтернĕ. Çу кунĕсем Куславкка тăрăхĕнче шăрăх та типĕ килнипе тухăç ытлашши пысăк пулайман. «Çапах гектар пуçне вăтамран 23 центнертан кая мар тухрĕ, – каласа парать Александр Валерьевич. – Кĕлете 4 пин тонна ытла тулă, ыраш, урпа хыврăмăр. Уй-хире тăватă комбайн тухрĕ. Вырма вăхăтĕнче çумăрлă тăни «сарă ылтăна» вăхăтра пуçтарса илме чăрмантараймарĕ. Малтанах тырă сутkаларăмăр-ха, Шупашкарти элеватора ăсатрăмăр. Халĕ хакĕ чакса кайнипе тытăнса тăратпăр. Чĕр тавар тирпейлекенсем тырă килограмне 5 тенкĕпе туянаççĕ. Ку хакпа тăкаксене саплаштарса тупăш илме йывăртарах. Тата хуçалăхра уй-хир ĕçĕсем те вĕсленмен, суту-илӳпе аппаланма вăхăт хĕсĕкрех. Мĕн пур техника, халăх çĕр улми уйĕнче.

Агрофирмăн «иккĕмĕш çăкăр» 200 гектар йышăннă. «Удача», «Колобок»,«Ред Скарлет» сортсене çитĕнтереççĕ кунта. Çу шăрăх та типĕ тăнине пăхмасăр çĕр улми аван. Уйрăмах «Колобок» текенни. Вăрлăха Чул хула облаçĕнче туяннă-мĕн. Кăçал малтанхи хут лартса пăхнă. Çитес çул унăн лаптăкне 6 агрегатпа татах ӳстересшĕн. «Иккĕмĕш çăкăр» гектар пуçне вăтамран 300 центнера яхăн тухать. Çу каçипех лаптăксене 6 агрегатпа шăварса тăни те тухăçа ӳстерме пулăшнă. Çĕр улмине анисем Енĕш юхан шывпа юнашар вырнаçни ĕçе çăмăллатнă, тăкака чакарнă.

– Кăçал хресченшĕн тухăçлă та ăнăçлă çулталăк. Республикăри чылай хуçалăхра тыр пул, пахча çимĕç ăнса пулнă. Тухăç пĕлтĕрхинчен самай пысăкрах. Кĕр хĕвеллĕ те типĕ тăрать. Уй-хир ĕçĕсене вăхăтра вĕçлеме пулăшать. Кун пек çанталăкра çимĕçе юр айне хăварсан намăс, – сăмахлать Александр Клементьев. – Пирĕн те çĕр улми нумай юлман. Халĕ уйра ăна 4 комбайн кăларать. Çав шутра виççĕшĕ «Гримми» текеннисем. Вĕсен ĕç хăвăртлăхĕ пысăк. Уйранултă техника çĕр улми турттарса тăрать. Хĕрӳ тапхăра 22 çынна явăçтарнă. Вĕсене кунне икĕ хут вĕри апат çитеретпĕр, тивĕçлипе тӳлеме тăрăшатпăр. Çумăр çумасан икĕ-виçĕ кунран ĕç-хĕле вĕçлетпĕрех.

Типĕ çанталăкра техника кал-кал ĕçлет, çимĕç ытлашши вараланмасть. Чăн та, иртнĕ çул çанталăк хресчен чăтăмлăхне тĕрĕслерĕ тейĕн. Çумăр вĕçĕмсĕр çуса тăнипе пахча çимĕç юр айне те юлчĕ. Куснарсене те хăватлă техника пулăшайман. Пылчăкра çине çинех чăхăмланипе ĕç кайман. Куснарсем иртнĕ çул нушаланнине пăхмасăрах çĕр улми лаптăкне чакарман. Хуçалăх ӳсен-тăран отраслĕпе аталанса пырать. Тырă, çĕр çулми – тупăш çăл куçĕ.

Акмалли лаптăксем, тухăç ӳссе пынă май кăçал агрофирма 3 пин тонна тырă кĕмелĕх хранилище тунă. Çĕр улми хумалли те пĕчĕк мар. Ăна тĕпрен юсаса çĕнетнĕ хыççăн 5 пин тонна ытла управа хывма пулать. Çĕнĕ технологипе тунă хранилищĕсенче сывлăш температурине ятарлă приборсем йĕркелесе тăраççĕ.

– Вĕсене предприяти вăйĕпе çĕклени хыснана самай пушатрĕ. Анчах уйран кĕнĕ пурлăха йĕркеллĕ упраймасан çука юлма пулать, – теççĕ хуçалăхра. – Строительство енне, ӳсен-тăран палăрмаллах хакланса каять. Шăпах тупăш илмелли тапхăр. Тата ун чухне техника та, çынсем те ирĕклĕрех.



тăкакĕн пĕр пайне бюджетран саплаштарма шантараççĕ-ха.

Лайăх хранилищĕсем республикăра сахалрах. Çавăнпа хуçалăхсенче пахча çимĕçе кĕркунне йӳнĕпех сутса пĕтерме тăрăшаççĕ. «Куснар» хуçалăхра вара управа ытларах хываççĕ. Хĕлле, уйрăмах çур

– Çанталăк йĕпе-сапана кайсан та сутма пулĕ-ха, хĕвеллĕ кун чухне унпа вăхăта сая ярас килмест. Паян çурхи кун кăна мар, кĕрхи те çулталăк тăрантарать. Кĕркуннехи кашни типĕ кун çĕр çыннишĕн хаклă, – палăртрĕ Александр Клементьев.

Хуçалăхра кĕрхи ыраш 530 гектар акса хăварнă. Халĕ пушаннă уйсенче çĕртме тăваççĕ. Йĕпе-сапа пуçланиччен уй-хир ĕçĕсене йăлтах вĕçлесшĕн.

– Кăçал хуçалăхсенче кĕр ĕçĕсем хушăнчĕç. Çав шутра Куснарсен те. Районĕпе кĕрхи культурăсем 3 пин гектар ытла акса хăвартăмăр. Кăтарту иртнĕ çулхинчен пысăкрах. Халĕ тĕп ĕç – çĕр улми, пахча çимĕç пуçтарса кĕртесси. Çанталăк уяр тăрать. Ĕç-хĕле вăхăтра вĕçлесси хамăртан килет, – терĕ Куславкка районĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ Юрий Забраев. – Çывăх вăхăтра уйсем пушанас шанăç пысăк.

**Лариса НИКИТИНА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Александр Клементьев; механизаторсем çĕр улми пуссинче.**

**Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.**



# Утакан çул такăрланать

Ку тăрăхра чылай хушă пулманран, улшăнусем тӳрех куç умне ӳкеççĕ: икĕ хутлă кантур çурчĕ, хăватлă техника, хранилищĕсем... Юлашки тапхăрта хуçалăх самай аталанса вăй илнĕ. Унччен фермер ĕçне пуçăнакан Василий Семенов хуçалăх аталанăвĕн çулйĕрĕпе паллаштарни пурнăçланма пултарайман илемлĕ юмах пек туйăннăччĕ. Куç хăрать те алă тăвать çав. Тепри пулсан тахçанах аллине сулнă пулĕччĕ. Вăл вара такăна-такăнах хăй ĕмĕчĕ патне талпăнчĕ. Йывăрлăх ăна çирĕплетрĕ кăна темелле.

Çак тапхăрта фермер хуçалăхĕн ертӳçи те улшăнма



ĕлкĕрнĕ. Василий Николаевич аслă пĕлӳ илнĕ ывăлне хăрамасăрах хуçалăх тилхепине шанса панă. Ара, вăл ачаранах ашшĕпе пĕрле вăй хунă. Мускавран каникула таврăнсан та уй-хиртен кĕме пĕлмен каччă.

– Хуçалăха манран та лайăхрах пĕлсе тăрать вăл, – кăмăллăн палăртрĕ В. Семенов. – Хальхи çамрăксем анлă тавра курăмлă, пурнăçпа тан утма пĕлеççĕ. Иван та рынокри лару-тăрăва шута илсе ĕçлеме тăрăшать.

Çичĕ хут тар кăларса хывнă çула ывăлĕ малалла такăрлатма, тăван тăрăхрах юлма кăмăл тунишĕн аслин чунĕ хĕпĕртет. Çĕр-шывăн тĕп хулинче пĕлӳ илнĕ çамрăксенчен яла таврăнакансем татах пур-ши? Çитменнине çĕр ĕçне кӳлĕнекенсем. Василий Николаевич та хуçалăхрах тăрăшать-мĕн, ывăлне хаваспах пулăшса пырать. «Эпĕ консультант халĕ», – терĕ вăл.

Ял хуçалăх таварне туса илекенсемшĕн хак ыйтăвĕ çивĕччисенчен пĕри. Çамрăк ертӳçĕпе паллашнă май калаçу сисмесĕрех ун çине куçса кайрĕ.

– Ир пулакан çĕр улми килограмĕ икĕ кун вунă тенкĕ тăчĕ те каллех йӳнелчĕ. Утă уйăхĕ вĕçленнĕ тĕле – 6, кайран 3 тенке çитрĕ. Çулла пирĕн тăрăхра çумăр çумарĕ тесен те юрать. Шăвармалли техника çителĕксĕррипе татах туянма тиврĕ. Куллен шăварса тăнипе кăна тухăçа ӳстертĕмĕр. «Иккĕмĕш çăкăр» гектар пуçне вăтамран 320 центнер тухрĕ. Ăна 42 гектар çитĕнтертĕмĕр. Çĕр улми лаптăкĕ пушаннă ĕнтĕ. Халĕ купăста касатпăр. Вăл 42 гектар йышăнать. Ир пулаканнисене тахçанах сутса пĕтернĕ. Кĕрхисене сутма тата тăварлама хатĕрлетпĕр, – каласа парать Иван Васильевич. – Купăстана кĕркуннерен пуçласа нарăс уйăхĕччченех тăварлатпăр, кайран сутма тытăнатпăр.

Сутма ятарлă сорт çитĕнтереççĕ. Купăста калчисене пĕрпĕринпе тачă лартса хăвараççĕ. Çакă вĕсене ытлашши сарăлса ӳсме памасть.

5-мĕш стр. ➔

# «Апат-çимĕçсĕр юлмăпăр»

1-мĕш стр.

– Чăваш Енре ял хуçалăх таварĕсем туса илекенсене хăйсем çитĕнтернĕ çимĕçе сутма майсем туса парас тĕллевпе кăçалхи çурла уйăхĕн 23-мĕшĕнчен пуçласа Шупашкарта, Улатăрта, Канашпа Çĕмĕрлере, çурла уйăхĕн 30-мĕшĕнчен Çĕнĕ Шупашкарта «Кĕр парни» уйăхлăх пуçланнă. Ярмăркка юпа уйăхĕн 26-мĕшĕччен тăсăлать. Суту-илӳ вырăнĕсемпе тӳлевсĕр тивĕçтерeççĕ. Ку вăхăтра ял хуçалăх таварĕсен хакĕ йӳнĕрех.

Çурла уйăхĕн 23-мĕшĕнчен пуçласа авăн уйăхĕн 21-мĕшĕччен 914 тонна çĕр улмипе пахча çимĕç 10930 пин тенкĕлĕх сутма пултарнă, çав шутра 723 тонна çĕр улми (7418,9 пин тенкĕлĕх) тата 158,0 тонна пахча çимĕç (2141,6 пин тенкĕлĕх) тата 1370,0 пин тенкĕлĕх ытти апат-çимĕç.

Пахча çимĕçсĕр пуçне ярмăрккăра консервланă çимĕç, пыл, ешĕл çимĕç, тĕш тырă, курăк тата ыт. те пур.

Уйăхлăха Чăвашпотребсоюз тытăмĕнчи организацисем, фермер хуçалăхĕсем, килти хушма хуçалăхсем те хастар хутшăнаççĕ.

Туяннă тавара пенсионерсемпе ветерансене тата инвалидсене килĕсене тӳлевсĕрех çитерсе параççĕ.

Авăн уйăхĕн 15-мĕшĕнчен Мускаври Семеновская площадĕнче ярмăрккă иртнĕ. Унта Етĕрне тата Муркаш районĕсенчи 20 хресчен (фермер) тата килти хушма хуçалăхсем хутшăннă.

**– Кăçал пан улми ăнса пулчĕ. Ял çынни ăна ниçта хума аптăрать. Сутас тесен те туянакан çук. Çав вăхăтрах лавккасен сентрисем ют çĕр-шывран илсе килнĕ çимĕçпе тулнă. Хамăр республикăрах пан улми, улма-çырла, пахча çимĕç тирпейлекен предприятисем йĕркелеме май çук-ши?**

– Республикăра çĕр улми, пахча çимĕç, улма-çырла тирпейлекен 7 предприяти ĕçлет. Чăн та, кăçал пан улми тухăçĕ пысăк. Предприятисем производство валли мĕн чухлĕ çимĕç кирлĕ – çавăн чухлĕ йышăнаççĕ. Чăваш Енре сад ĕçне унпа кăсăкланакансем туса пыраççĕ, ăна промышленноç тĕлĕшпе аталантарайман. Тухăç кашни çулах пулмасть. Çавăнпа та предприяти йĕркелеме тăкаклă. Кӳршĕ регионсенче – Чул хула облаçĕнче (Лысково), Самар облаçĕнче (Сызрань) – улма-çырла тирпейлекен предприятисем пур. Вĕсем çимĕçе халăхран туянаççĕ. Кăçал Чăвашпотребсоюз организацийĕсем тата Етĕрне райпоВĕ те малашне сутса тупăш тăвас тĕллевпе ял çыннирен пан улми туянать.

**– Анăç пире хирĕçле чарусем йышăнни Чăваш Енре палăрчĕ-и? Раççей хăйне хăй çĕр улмипе, тĕш тырăпа тăрантарма пултарĕ-ши? Аш-какай, сĕт юр-варĕ тата улма-çырла тĕлĕшпе еплерех? Ытти регионсем пирĕн аш-какая пĕтĕмпех туянсран, вăл хамăр халăх валли юлмасран шикленместĕр-и?**

– Раççее хирĕçле санкцисем йышăннă çĕр-шывсенчен ял хуçалăх таварĕ, ытти апат-çимĕç илсе килменни пирĕн лару-тăрăва лайăхлатать. Пĕрремĕшĕнчен, тавар туса илекенсемшĕн çул уçăлать. Паянхи кунчен суту-илӳ тытăмĕнче вырăнти апат-çимĕç çителĕксĕр пулнă. Йышăннă мерăсем вара лавкка сентрисене ют тавартан пушатаççĕ, ун вырăнне хамăр апат-çимĕç пулĕ. Анчах кирлĕ тавара тĕнчери ытти çĕр-шывран кӳрсе килесси çинчен те манмалла мар.

Кăçал ял хуçалăх продукцийĕ ытти çулсенчи вăтам шайпа танлашать:

тĕш тырă – 500 пин тонна (2013 çулхипе танлаштарсан 126,2 процент);

çĕр улми – 633 пин тонна (100 процент);

пахча çимĕç (пĕтĕмĕшле) – 141 пин тонна (100,1 процент);

пусмалли выльăх-чĕрлĕх, чăх-чĕп (чĕрĕ виçепе) – 108 пин тонна (106,8 процент);

сĕт – 423 пин тонна (100,05 процент);

çăмарта – 270 млн штук (80 процент).

Чăваш Республики хамăр халăха çĕр улмипе, пахча çимĕçпе пĕтĕмĕшле тивĕçтерет. Климат условийĕсене пула пирĕн тăрăхра хăш-пĕр улма-çырлана, бахча культурине çитĕнтерме май çук. Вĕсене Азербайджан, Узбекистан тата ытти çĕр-шывран кӳрсе килеççĕ.

Хальхи вăхăтра ĕне ашĕ (50,2 процент) тата чăх-чĕп какайĕ (73,1 процент) çитмеççĕ. Майракаллă шултра выльăх ашне туса илессине хăвăрт ӳстерме май çук. Ку отрасль вăрах вăхăтлă инвестицие пăхăнать. Çавăнпа та çитес вăхăтра чăх-чĕп, сысна ытларах усрама тытăнасшăн. Апла республикăри халăха аш-какайпа тивĕçтерме пултарăпăр.

Халăха хамăр сĕтпе тивĕçтерессi паян 140 процентпа танлашать. Республикăран сĕт, сĕт юр-варĕ илсе каяççĕ. Ун вырăнне çак апат-çимĕçе урăх регионтан илсе килеççĕ.

Хальхи вăхăтра Чăваш Ен апат-çимĕç тĕлĕшпе ют çĕр-шыва пăхăнса тăмасть. Ку юхăм ытларах пысăк хуласене пырса тивет. Анчах Раççей чару йышăннăран апат-çимĕçе хамăр туса илесси ӳсет, ăна регионсем тăрăх салатĕç. Çавăнпа та республикăра пурăнакансем ашсăр юлмĕç. Лавкка сентрисем çинче Чăваш ашĕ те пулĕ. Хаксене вара сăнасах тăмалла.

**– Сирĕн ведомство тăрăшнипе халĕ ăратлă выльăх ĕрчетессипе ĕçлеççĕ. Ку отраслĕн малашлăхĕ мĕнле?**

– Ăратлă ĕне выльăх (хура-ула ăрат) аталантарма 6 завод тата 13 репродуктор ĕçлет. Республикăри пĕтĕмĕшле ял хуçалăх организацийĕсем суса илнĕ сĕтрен 38,8 процентне вĕсем хатĕрлеççĕ. Енчен те 2013 çулта ĕне тухăçлăхĕ ял хуçалăх организацийĕсенче, пĕчĕк предпринимательлĕхсĕр пуçне, 4515 кг сĕтпе танлашнă пулсан, ăратпа ĕçлекен организацисенче – 5707 кг.

Пысăк шурă сысна (йоркшир, ландрас ăратсем) ĕрчетес тĕлĕшпе 1 завод тата 3 репродуктор ĕçлет. Республикăра çавăн пекех Çĕрпӳ ăратне ĕрчетекен генофондлă 1 хуçалăх йĕркеленĕ. 2015 çулта Шупашкар районĕнчи «ТП «Сувар – 2» пĕрлешӳ ăрат ĕрчетекен хуçалăх статусне илме хатĕрленет.

**– Республикăра «Фермер ĕçне пуçăнакансене пулăшасси» тата «Çемье фермине аталантарасси» ятарлă программăсем мĕнле пурнăçланаççĕ?**

– Чăваш Ен 2012 çултанпа федерацин «2012-2014 çулсенче фермер ĕçне пуçăнакансене пулăшасси» тата «Хресчен (фермер) хуçалăхĕн никĕсĕ çинче çемье фермине аталантарасси» программăсене пурнăçлама хутшăнать. Виçĕ çулта фермер ĕçне пуçăнакан 151 çын тата çемье фермине аталантаракан 16 ентеш патшалăх пулăшăвне тивĕçнĕ.

**– Пирĕн республикăра агропромышленноç комплексĕн мĕнле инвестици проекчĕсем пурнăçа кĕреççĕ?**

– Республикăра строительство, выльăх-чĕрлĕх объекчĕсене реконструкцилес тата юсаса çĕнетес проектсем пурнăçланаççĕ.

«Агропромышленноç комплексне аталантарасси» наци проекчĕ пурнăçа кĕме пуçланăранпа выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче 178 инвестици проекчĕ хута кайнă, тепĕр 24-шĕ черетре тăраççĕ.

Хальхи вăхăтра пысăк проектсенчен пĕри – «Агрохолдинг «Юрма» пĕрлешӳре чăх-чĕп витисем туни. Çавна май инвестор бизнес-план хатĕрленĕ, производствăна аталантарма 4,5 млрд тенкĕ кирлине палăртнă.

Производствăна аталантарас тĕллевпе Шупашкар районĕнчи «Акашевская» чăх-чĕп фабрикинче те юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Развитие» пĕрлешӳре аш валли майракаллă шултра выльăх ĕрчетме тытăнасшăн. Пĕрлехи проекта Китай Халăх Республикипе пурнăçлама килĕшӳ тунă. Çавăн пекех «Вăрнарти аш-какай комбинатĕнче», Тăвай районĕнчи «Акконд-Агро» тата Муркаш районĕнчи «Путь Ильича» пĕрлешӳсенче сĕт-çу комплексĕсем тăвас ĕç пырать.

Ял хуçалăх организацийĕсемсĕр пуçне чĕр тавара тирпейлекен предприятисен производстви те çĕнелет.

**– Паянхи кун лавккасенче Китайран кӳрсе килнĕ ыхра сутаççĕ. Çав вăхăтрах ял çынни паха, экологи тĕлĕшĕнчен таса ыхра çитĕнтерет. Суту-илӳ организацийĕсен ертӳçисем ăна темшĕн хисеплемеççĕ.**

– Чăваш Енре ыхрана килти хушма хуçалăхра тата дачăра çеç ӳстереççĕ. Урăхла каласан, ку тĕлĕшпе промышленноç производстви аталанман. Ăна ытларах пасарта тата ярмăрккăра сутаççĕ. Чăн та, халăх вырăнти ыхрана туянасшăн. Суту-илӳ тытăмĕсем вара çирĕпленнĕ йĕркепе, пысăк калăпăшпа туянаççĕ. Ку тĕлĕшпе паян рынок пушăрах. Çавăнпа та ял хуçалăх таварĕ туса илекенсене ыхра çитĕнтерессине промышленноç никĕсĕ çинче аталантарма сĕнетĕп.

**– Ял халăхне сĕт хакĕ яланах пăшăрхантарать. Халăхран туянакан сĕтĕн вăтам хакĕ 12-14 тенкĕпе танлашать. Вăл ӳсессе шанма пулать-и?**

– Туянакан сĕт хакĕ сезонран килет. Çурхи-çуллахи вăхăтра вăл чакать, кĕркунне-хĕлле – ӳсет. Мĕншĕн тесен ку вăхăтра сĕт сахал. Паянхи кун халăхран туянакан сĕт хакĕ – 13-14,5 тенкĕ (1 литршăн). Хак çулсеренех кăрлач-нарăс уйăхĕсемччен хăпарать. Çавăнпа та вăл малашне ӳсесси куç кĕрет.

**– Халăха ялан кирлĕ таварсен хакне час-часах сăнаса тăратăр-и? Хаксен йĕркеленĕвне мĕнле витĕм кӳмелле?**

ЧР ял хуçалăх министерстви кăçалхи çурла уйăхĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа кашни кунах ял хуçалăх тата промышленноç таварĕсен хакĕсене, Раççее ютран кӳрсе килме чарнисенне, сăнаса тăрать. Информацие Раççей Федерацин апат-çимĕç хăрушсăрлăхĕн мониторингпа прогнозировани тытăмне, Чăваш Республикинчи ятарлă çыхăнупа информаци центрне ярса паратпăр. ЧР Ял хуçалăх министерстви мониторинг ирттерме респондентсем суйланă.

Чăваш Республикинчи «Агро-Инноваци» эрнесерен ял хуçалăх таварĕ, апат-çимĕç, чĕр тавар, пурлăхпа техника хакĕсен мониторингне йĕркелет. Вĕсен кăтартăвĕсене ЧР Ял хуçалăх тата «Агро-Инноваци» сайчĕсене вырнаçтараççĕ.

Хаксем пасар витĕмĕпе йĕркеленеççĕ. Хак йĕркеленĕвне витĕм кӳме пултараймастпăр, анчах пирĕн вĕсене сăлтавсăр ӳсме ирĕк памалла мар.

**Валентина МАКСИМОВА.**

**ВИÇÇĔ ВИÇ ТЕ ПĔРРЕ КАС**

# Хăйпе хăй хуçа мар

Çемьере алкоголик е наркоман пурри – чăн-чăн инкек. Çавна май унпа килйыш çеç мар, сывăх çынсем те нушаланаççĕ. Шăпах вĕсем ултавçăсемпе хура чунлă риэлторсен аллине çакланаççĕ.

Йĕркесĕр лару-тăрура вĕсем йӳнĕпех хăйсен çуртне, хваттерне пĕр палламан çынна сутма е парнелеме пултараççĕ. Каярахпа тăванĕсен ку ĕçпуçпа килĕшменнине судра татса пама тивет. Çакнашкал çивĕч ыйтуран асăрханма пулатех. Кун пирки пире Росреестрăн Чăваш Енри управленийĕн ĕçченĕсем каласа кăтартаççĕ.

«Кил-çуртсăр е хваттерсĕр юлас килмесен тăванĕсен судра гражданинăн право пултарулăхне чакарни çинчен йышăну тумалла, – тет куçман пурлăх прависене регистрацилекен уйрăмăн пуçлăхĕ Ольга Николаева. – Кунашкал йышăнăвăн копийĕсем тӳрех пирĕн пата, управление, килеççĕ. Хăш-пĕр çын документсене управлени офисĕнче хăварнă е право экспертизи ирттернĕ чухне хăйĕн туприне тытма пултараймасса куратпăр. Çакнашкал çынсен попечитель пулмаллах. Вăл вара ун ячĕпе куçман пурлăха тытса пурăнать».

Ольга Владимировна вăтă çын пур çемьесене те асăрхануллă пулма сĕнет. Вĕсем те тăванĕсенчен вăрттăн хăйсен хваттерĕсене ют çынсене панă тĕслĕхсем пулнă.

«Амăшĕ вилнĕ хыççăн хваттерне хĕрĕ судпа тавăрасшăн пулнă. Амăшĕ инвалид пулнăран мĕн тунине те ăнланманнине палăртнă хĕрĕ. Анчах унăн ăнсăрлăхне çирĕплетме пултарайман вăл. Ку тĕлĕшпе суд йышăнăвĕ пулман, – аса илет иртнине Ольга Николаева. – Амăшĕ сывă чухне унăн ăс-тăнĕ чакни пирки йышăну çирĕплетмелле, опекунĕ пулмашкăн тăрăшмалла пулнă. Ун пек чухне амăшĕ хĕрĕн ирĕкĕсĕр хваттерне сутайман пулĕччĕ».

Юлашки вăхăтра Чăваш Енре гражданинăн ăнсăрлăхĕ е право пултарулăхне чакарни çинчен калакан суд йышăнăвĕ палăрмаллах ӳсрĕ. Çулталăк пуçланнăранпа управление çакнашкал йышăнăвăн 956 копийĕ килчĕ.

«Хваттер сутнă-туяннă е парнеленĕ чухне пирĕн пата çакăн пек граждансем килни те пулнă, – палăртать Ольга Владимировна. – Пĕрре пăхсан – йĕркеллĕ çынах тейĕн. Йышăну вăхăтĕнче е право экспертизи ирттернĕ чухне çеç вĕсем пирки суд йышăнăвĕ кирлине пĕлетĕн».

Шел те, куçман пурлăх прависен пĕрлĕхлĕ патшалăх реестрĕ паракан хут çинче кун пирки палăртмаççĕ. Енчен те сутуçăн çитменлĕхĕсене хваттер туянакан асăрхасан, ăна патшалăх реестрне кайса ăнсăрлăха палăртни çинчен калакан хут илмешкĕн сĕнме пулать. Кун пек чухне пурте куç умĕнче. Унсăр пуçне управлени ĕçченĕсем патшалăх регистрацине иртнĕ хыççăн çеç укçа-тенкĕпе татăлма сĕнеççĕ.

**Марина ИВАНОВА.**

Аслă Çĕнтерÿ: 70 çул

# «Кашни каç пĕлĕт вутра»



**Комсомольски районĕнчи Тăманлă Выçли ялĕнче пурăнакан Валентина Портнова килĕнче фронтран янă 31 çыру упранать. Вĕсене Валентина Геннадьевнăн хуняшшĕ Василий Гаврилович Портнов хăйĕн çемйи патне çырнă. Пурне те Евдокия Иванова (мăшăрĕ) ячĕпе янă. «Çырусене малтан Евдокия Михайловна упраса пурăннă. Кайран çак тупра пирĕн алла куçрĕ, – тет Валентина Геннадьевна. – Килте пĕчĕк чăматан пур. Шăпах унта сыхланаççĕ вĕсем. Ывăл салтакран янă çырусем те кунтах. Пĕрне те пăрахман, çурман. Вĕсем никама та чăрмантармаççĕ, çăкăр ыйтмаççĕ».**

**Тирпейлĕ çын япалана упрама пĕлетех. Çак çырусем çичĕ теçетке çул ытла выртаççĕ чăматанра. Кил хуçи хĕрарăмĕ хăй ялти вулавăшра ĕçленĕ май вăрçă темипе мероприяти е курав йĕркеленĕ чухне вĕсемпе усă курать. Çырусемпе шкул ачисене, ял-йыша паллаштарать. «Вуламассерен куççуль юхать», – тет вăл.**

**Кăранташпа çырнисене вулама май çук, сас паллисем палăрмаççĕ. Чернилпа шăрçаланисем лайăххах упраннă.**

**Евдокия Михайловна та, Василий Гаврилович та ку тĕнчере текех çук ĕнтĕ. Апла пулсан та вĕсен сăнарĕсем ачисен, мăнукĕсен асĕнчен каймаççĕ. Ахальтен мар çак çырусем хальччен тĕрĕс-тĕкел упранаççĕ.**

**Василий Гаврилович çырăвĕсене вырăсла çырнă. Мăшăрĕ вырăс пулнă. Çапах вĕсенче чăвашла предложенисем те пур. Кашнинех çар цензури тĕрĕслени çинчен пичет çапнă.**

**Çырусене чăвашла куçарса пичетлетпĕр.**

*Сывă-и, Дуся!*

*Çĕнĕ çул ячĕпе ăшă салам яратăп. Санăн кулленхи ĕçÿнте лайăххине çеç сунатăп. Атте-аннене, Макара, Бориса, Матвее тата ыттисене манран салам. Дуся, эпĕ 4 уйăх çарта, çапах Матвей ман пата пĕр çыру та çырмарĕ. Вăл мана çиленнĕ пулас. Нивушлĕ вăл пиччĕшĕн пурнăçпе кăсăкланмасть. Сирĕн хутшăнусем унпа епле рех? Эсĕ вĕсем патне çÿретĕн-и? Хăйсем килсе каяççĕ-и? Георгий вĕсем патне каять-и? Пĕр-пĕрин хушшинче хирĕçÿ çук-и? Çырса пĕлтер. Матвей мĕн ĕçлесе пурăнать? Пурне те çырса яр. Дуся, эсĕ сăн ÿкерчĕк ярса парасшăнччĕ. Эпĕ питĕ кĕтетĕп. Сире курас килет. Енчен те сăн ÿкерĕнме май килсен – ÿкерĕнĕр.*

*Володьăпа Гришăран çыру килменнине хыпарланăччĕ эсĕ. Халĕ епле рех? Хальхи вăхăтра çухалма çăмăл, вăхăчĕ çапла. Дуся, мĕнле ĕçлетĕн? Районти сывлăх сыхлавĕн тата ял Канашĕн ĕçченĕсем санпа кăмăллă-и? Ял Канашĕн ертÿçи тата колхоз председателĕ кам?*

*Хамăн пурнăç пирки çырса пĕлтерем. Хальхи вăхăтра манăн пурнăç аван. Нимĕн пирки те ÿпкелешместĕп. Унченхи специальнăçпах ĕçлетĕп, кун пирки хăвах тĕшмĕртетĕн. Çырăва ĕçре çыратăп. Малашнехи пурнăç пирки нимĕн те калама пултараймастăп, пурăнсан – курăпăр.*

*Эпĕ сире 120 тенкĕ ярса панăччĕ. Илтĕр-и е çук? Дуся, ман пирки мар, ытларах ачасем пирки шухăшла. Вĕсене ан ятла, ан кÿрентер. Май килнĕ таран лайăххрах апатлантар. Атте пур чухне лайăх çиеттĕмĕр, халĕ çăкăр та памаççĕ тесе ан калатăр Георгий. Маншăн тунсăхлама ан пар. Вĕсене лăпкăн пурăнма хăнăхтар.*

*Ăнланатăп, Дуся, сана пĕччен йывăр, анчах нимĕн те тăваймăн. Пĕтĕмпех чăтмалла, тÿссе ирттермелле. Енчен те сывă юлсан – хăçан та пулсан таврăнăп. Çырăва салампа вĕçлетĕп. Сире хыттăн чуп тăватăп. Телейлĕ, лайăх пурăнăр.*

*Сывă пул, хаклăскерĕм.*

*Адрес: П.П.С. \1572 ОПС-51 подразделение \3. Портнов Василий Гаврилович.*

*Мускав 1.01.42. Салампа (алă пуснă).*

*28.09.42.*

***

*Сывă-и, хаклăскерĕм!*

*Салам, салам, салам пурне те!*

*Дуся, Клин патĕнче пулнă хыççăн эпир каллех çула тухатпăр. Ăçта? Хамăр та пĕлместпĕр. Вырăна çитсен çеç пĕлĕпĕр. Паллах, лайăххине нимĕн те кĕтмелли çук. Малашне çыру çырма пултараймассине, паян кăна ырă-сывă пулнине шута илмелле.*

*Авăн уйăхĕн 29-мĕшĕнче 8 сехетре эпир çула тухатпăр. Çавăнпа та эпĕ санăн çырăвусене каллех илсе вулаймăп. Юлашкине, сăн ÿкерчĕкпе яннине, Покровскра çурла уйăхĕн 30-мĕшĕнче илтĕм. Ку сăн ÿкерчĕк манăн кăкăрта юлашки сывлăш тухма пăрахичченех упранĕ. Енчен те тăшман пульли чĕрене тĕллет пулсан малтанах сирĕн витĕр иртĕ. Хаклă Дуся тата ачамсем, Гера тата Валя, сире хыттăн чуп тăватăп. Тен, куççульпе. Мĕн тăвăпăр – вăхăт çавнашкал. Сывă пулăр Дуся, Гера, Валя, атте-анне. Çыру ан çыр, кайран пĕлтерĕп. Салампа Вася.*

***

*Сывă-и, хаклă Дуся, Гера, Валя!*

*Сирĕн пата ăшă салам яратăп. Кулленхи пурнăçра лайăххине кăна сунатăп. Дуся, çĕнĕ адреспа янă çырăвусене сайра хутра çеç илетĕп. Çĕнĕ çĕрте санран, хаклăскерĕм, пĕр открытка кăна илтĕм. Унта лайăх мар хыпар пĕлтернĕ эсĕ. Паллах, çав тери йывăр чĕрере. Аслă пичче Макар Гаврилович çĕршыва хÿтĕлесе пуçне хунă. Унăн пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Пирĕн хуйхă ун патне çитмест, вĕри куççуль ăна пăлхантарма пултараймасть. Канлĕ çывăр, юратнă пиччем. Ачисене шел. Дуся, çыру çырнă май куççуль юхать. Мĕншĕн тесен хамăн ачасене те çакнашкал шăпа кĕтме пултарать. Ман пурнăç çинчен нимĕн те пĕлместĕн эсĕ: пурнăç е вилĕм? Дуся, эпир халĕ те çеçен хиртех. Кунта вăрман та, шыв та, ял та, мунча та тата ыт. те çук. Çеçен хирти сивĕ çил кăна пирĕн ÿт-пĕве тыллать. Эпĕ шăнса чирлерĕм. Пĕрмай пуç ыратать, ÿслĕк аптратать, сасă çĕтрĕ. Сывлăх çакнашкал. Кунсем сивĕ тăраççĕ, эпир вара çу уйăхĕнчи тумтирпе çÿретпĕр. Иртнĕ çырура посылка ярса пама ыйтнăччĕ. Анчах вăл паянхи кунччен те çук. Тен, эсĕ вăл çырăва илеймен. Дуся, каçар, эпĕ сире хамăн çырусемпе йăлăхтартăм пулсан. Чĕре сывă чухне сире манма пултараймастăп. Сире те, мана та вăрах кĕтсе пурăнма йăлăхтарчĕ. Анчах нимĕн те тăваймастпăр, пирĕн ирĕк çук. Сăрă шинель çирен каймасть. Пурнăç çав тери йывăр, йÿçĕ çарăк пекех. Эпĕ сирĕншĕн питĕ тунсăхлатăп. Ачасем палламалла мар çитĕннине çыратăн, анчах курса пулмасть пулĕ (ку предложение чăвашла çырнă – **В.П.**). Дуся, çыру çыр, мана, хăвăн çывăх тусна, манса ан кай. Сана çăмăл маррине туятăп эпĕ, халĕ пурин шăпи те çавнашкал. Малашне мĕн пулĕ – пĕлместĕп. Ку çыруран сывă юлатăп. Сывă пулăр Дуся, Гера, Валя. Сире хыттăн чуп тăватăп, аллăрсене чăмăртатăп. Тăвансене ăшă салам кала, пурин умĕнче те пуçа таятăп. Салампа Вася.*

*18.11.42.*

***

*Сывă-и, Евдокия Михайловна!*

*Дуся, Гера, Валя йышăнса илсемĕр манран салам. Мĕнле пурăнатăр? Эпĕ юлашки вăхăтра сиртен çыру илеймерĕм. Тен, сирĕн çырма вăхăт та çук. Е эсир мана кÿрентĕр? Пĕр çырура киле пырасси пирки пĕлтернĕччĕ, хам вара пыраймастăп. Малашлăх пирки шухăшлас та килмест манăн. Хальхи вăхăтра хама питĕ япăх туятăп. Пĕрремĕшĕнчен, гриппа чирлетĕп, иккĕмĕшĕнчен, сирĕнпе курнăçайманшăн кулянатăп. Дуся, эпĕ сирĕншĕн питĕ пăшăрханатăп: хăвăр кăна епле пурăнăр? Эсĕ ĕçе кайсан ачасем пĕччен юлаççĕ-çке. Халĕ вăйлă çумăрсем пуçланчĕç. Пÿрте шыв илчĕ пулĕ. Сирĕн нушана ăнланатăп. Эх, питĕ шел. Георгий Валерие пĕччен хăваратăн, вĕсем пĕчĕккĕ-çке, нимĕн те ăнланмаççĕ. Вĕсем мĕнпе айăпа кĕнĕ? Гера лаша айне пулнине иртнинче ху çырса пĕлтертĕн-çке. Эпĕ çав тери хăрарăм. Дуся, çыру илмессерен яланах хуравлама тăрăш. Хальлĕхе унччен хи вырăнтах пурăнатăп: кивĕлле, улшăнусем çук. Эпĕ сире маларах саккас çырупа справка тата сăн ÿкерчĕк ярса панăччĕ. Хальччен эсир ăна илме тивĕç. Анчах санран çыру илеймерĕм, çавăнпа пĕлейместĕп. Çакăнпа эпĕ çырăва вĕçлетĕп. Сывă пулăр, хыттăн чуп тăватăп. Пурне те салам кала. Вася.*

*20.08.43.*

***

*Сывă-и, Дуся, Гера, Валя, шăллăмсем, тăвансем, пĕлĕшсем!*

*Сире Мăнкун ячĕпе саламлатăп. Чĕререн тухакан салама йышăнăр. Хисеплĕ, Евдокия Михайловна, эпĕ сирĕнпе çыхăнăва тахçанах çухатрăм. Раштав уйăхĕнчен сиртен çыру илмен. Эсир те манран илмен пулас. Çавăнпа та эпĕ те, эсир те пăшăрханнăн туйăнать. Çакă пирĕн пата çырусем илсе килменнипе, хамăр та вĕсене яраймannипе çыхăннă. Çапах ку çырăва яратăп. Эпир çула тухрăмăр. Гаврилович майор ĕмĕрлĕхех пуç хунă вырăналла каятпăр. Иккĕмĕш хĕл каçрăмăр, кăмăлтуйăм аван, вут-çулăмран, сивĕрен сывă юлтăм. Чылай юлташа кунта япанлăхах хăвартăмăр, пытартăмăр. Иккĕмĕш çул вăрçă пырать, анчах вĕçĕхĕрри курăнмасть. Малашне пĕр-пĕрне курайăпăр-ши? Чылай тÿсрĕм, анчах нуша çакăнпа çеç вĕçленмест. Сирĕнсĕр тунсăхлатăп, питĕ курас килет. Сергейпе Валерий епле рех улшăнчĕç? Вĕсене юратас, çупăрлас килет.*

*Çакăнпа çырăва вĕçлетĕп. Çак адреспа çырăр. Мĕнле пурăнатăр, мĕнле улшăнусем, хыпарсем пур? Хăвăр мĕн пĕлнине пурне те çырăр.*

*Дуся, пурне те манран салам кала. Сире те салам, чуп тăватăп. Салам Дуся, Гера, Валя.*

*Тепĕр çыруччен сывă пулăр. Портнов.*

*25.04.43.*

***

*Салам!*

*Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатăп сана, хисеплĕ кил-йышăм! Дуся, Георгий, Валерий манран ăшă салама йышăнса илсемĕр. Сире кулленхи пурнăçра лайăххине çеç сунатăп. 1944 çулта телейлĕ пулăр. Салам аттене, аннене, Бориса, иксесене, шăллăмсене, йăмăксене, кÿршĕсене, ратнесене. Пурне те Çĕнĕ çул саламĕ. Дуся, кăрлач уйăхĕн 2-мĕшĕнче эпĕ çак вырăнта санăн çырăвна илтĕм. Эсĕ ăна чÿк уйăхĕн 11-мĕшĕнче çырнă. Çак кунах Феньăран та çыру илтĕм. Паллах, уншăн питĕ савăнтăм, мана хисепленĕшĕн сире пысăк тав. Хам çинчен пĕлтересси – манăн тивĕç. Маларах çырнă çырусенче эпĕ сире кулянтартăм пулас. Каçару ыйтатăп. Мĕншĕн тесен сиртен çыру тахçантанпах илеймерĕм. Паллах, çакă маншăн питĕ йывăр пулчĕ. Эпĕ те сирĕнпе, пурнăçăрпа кăсăкланатăп. Мĕншĕн тесен эсир маншăн хамран та хаклăрах. Сире аса илмесĕр пĕр кун та иртмест.*

*Çакăн чухлĕ тÿсме, çар çынни пулса çапăçма çăмăл мар. Кун çути кăтартнăшăн тепĕр чух атте-аннене ылханатăн. Çветтуйсене аса илни те пулать. Сирĕнрен уйрăлнăранпа сахал мар шыв-шур юхса иртрĕ. Çак кунран пуçласа паянхи кунччен пĕр çĕртен тепĕр çĕре чылай кусрăмăр. Виççĕмĕш хĕл пурăнатпăр, анчах пурнăçа шанма çук. Мускавран Калинина, Клинран Сталинграда, Тулăран Киева каякан çулсем хыçа юлчĕç. Сывă юлсан тата ăçта пулса курăпăр-ши?*

*Пуян пурăнмастăп, чухăн тесен тĕрĕсрех. Витерехен сивĕсем хальлĕхе çук кунта, час-часах çумăр çăвать. Тумтир ăшă, лайăх. Çывăхра вăрман çук. Топливо тĕлĕшпе япăх. Кашни каç пĕлĕт вутра. Кашни каç тăманасем (тăшмана танлаштарать пулас – **В.П.**) вĕçсе килеççĕ. Урăх тĕлĕшпе нимех те çук. Нарăс уйăхĕнче мана килте кĕтнине çырнăччĕ эсĕ, анчах хальлĕхе нимĕн те пĕлместĕп. Çитес уйăхсем кунтах иртеççĕ пулас. Сире савăнтарасси пиртен килмест-çке.*

*Дуся, çырăва илсенех çырма тăрăш. Матвей, Николай ăçта? Вĕсен адресĕсене çырса яр. Çавăн пекех манăн адреса та вĕсене пĕлтер. Адрес улшăнман, çавах.*

*Феньăна, аннене, Володьăна салам кала. Эпĕ ун патне ĕнер çыру çыртăм. Пурне те салам. Çыру çырăр. Чуп тăватăп. Çĕнĕ çул ячĕпе.*

*Салампа Вася.*

*3.01.44.*

**Паттăр салтак Берлина çитнĕ. Вăрçă пĕтиччченех связист пулса çапăçнă. Шăпа ăна таван килне таврăнма пÿрнĕ. Пĕр вăхăт вăл колхоз председателĕнче, зоотехникра, кирпĕч заводĕнче мастерта вăй хунă, мăшăрĕ вара – медсестрара. Георгипе Валерисĕр (çырура ăна Валя тенĕ) пуçне вĕсем тепĕр виçĕ ача çуратса ÿстернĕ. Василий Гаврилович 1969 çулта вилнĕ. Вăл ун чухне 58 çулта çеç пулнă. Вăрçă суранне, терт-нушана пула вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Ачисен ÿсĕмĕсемпе савăнайман салтак.**

**Валентина ПЕТРОВА.**



# Йăлкăш

Элĕк районĕнчи Йăлкăш ял тăрăхĕнче 1026 çын пурăнать. 6 ял халăхĕ пурăнать кунта: Йăлкăш, Исванккă, Уйкас, Тимĕрçкасси, Пĕчĕк Йăлкăш, Пĕчĕк Элĕк. Йăлкăш район центрĕнчен 5 çухрăмра вырнаçнă, Шупашкартан – 60.

Ку тăрăхра пурăнакан чăвашсем ĕлĕкренпех çĕр ĕçĕпе, выльăх-чĕрлĕхпе ĕçленĕ. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче кунта 7 çил арманĕ, 2 тимĕрç лаççи пулнă.

Хальхи вăхăтра ял тăрăхĕнче вăтам шкул, библиотека, клуб, потребсоюзăн 2 лавкки, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пуç хунă ентешсене тата граждан вăрçин паттăрне П. И. Иванова халалласа уçнă палăксем пур. Ял тăрăхĕн территорийĕнче «Дружба» хуçалăх тата В. Н. Ивановпа С. Л. Кононов фермер хуçалăхĕсем вырнаçнă.

**Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ӳкерчĕкĕсем.**



Тамара Иванова пенсионер



Валерий Сергеев



Андрей Николаев, юсав irttерекен çуртăн хуçи



Валерий Евдокимов электромонтажник



Александр Иванов



Артем Николаев



Виталий Леонтьев пенсионер

# Утакан çул такăрланать

🡐 2-мĕш стр.

Çимĕç 1,5 – 3 килограмран иртмест. «Пасара ытларах кил хуçи хĕрарăмĕсем çӳреççĕ. Вĕсене пĕр хут пĕçермелĕх пĕчĕкрех купăста кирлĕ. Касса хунин сĕткенĕ типет-çке. Тата йывăр çĕклемпе камăн нушаланас килтĕр? – терĕ фермер. – Паллах, пĕчĕкрех купăста пуçĕсем туса илнипе тухăç чакать. Анчах пирĕн чи малтан туянакан ыйтăвне тивĕçтермелле. Сутăнман тавар çитĕнтерсе мĕншĕн тăкакланмалла?» – пĕтĕмлетет И. Семенов.

Туянас текенсем вара сахал мар, килсех тăраççĕ. Унччен хакĕ йӳнĕрех пулнипе чĕр тавара сутлăх хатĕрлесе ĕлкĕреймен. Ĕçлекенсем çителĕксĕррипе те çыхăннă ку.

– Тавар хăвăрт та лайăх сутăннине кура эпир хака ӳстертĕмĕр, килограмне 5 тенке çитертĕмĕр. Кун хыççăн туянакансем сахалланчĕç пулин те тупăш илесси ӳсрĕ. Тар тăкса çитĕнтернĕ çимĕçе мĕншĕн йӳнĕпех парса ямалла? Вĕсем пирĕнтен курттăм туянса икшер-виçшер хут хаклăрахпа ярăнтараççĕ. Хамăрăнах сутмалла та, анчах харăсах темиçе ĕç тăваймăн. Ман шутпа кашнин хăйĕн çулĕпе утмалла: пĕри суту-илӳпе ĕçлемелле, тепри – çĕр ĕçĕпе, виççĕмĕшĕ тата урăххипе. Хĕрӳ тапхăрта суту-илӳпе аппаланма вăхăт хĕсĕкрех. Кун пек чухне тавара курттăм парса ярсан аванрах.

Фермер хуçалăхĕнче хăяр – 8, помидор – 1,5, ытти пахча çимĕç 1,5 гектар. Вĕсене те пичкесене тăварласа чикнĕ, сутма хатĕрленĕ. Тирпейленĕ чĕр тавар лайăхрах каять-мĕн тата унăн хакĕ те пысăкрах. Шупашкар, Хусан, Анат Чаллă тата ытти хуласене саланать чăваш çимĕçĕ. Вĕсене хапăлласах кĕтсе илеççĕ.

Çамрăк ертӳçĕн тĕллевĕ пысăк – акакан-лартакан лаптăксене ӳстернĕ май ытти культурăсене те туса илме тытăнасшăн. Сăмахран, кишĕр. Темиçе çул каялла унпа та ĕçленĕ-ха. Анчах ятарлă техника çуккипе акма пăрахнă. «Ĕç алли çине шанса ларнипе аталанаймăн. Кишĕр валли комбайн туянмалла. Ун чухне лаптăка та ӳстерме май пулĕ. Комбайн сезонра 40-50 гектар кăларса пуçтарать. Çимĕçĕн тухăçĕ те пысăк, гектартан 700-800 центнер илме пулать. Тата вăл çĕр улмирен хаклăрах. Апла тупăшĕ те ытларах. Çĕр улми, купăста туса илме техника çителĕклех, технологине те вĕренсе çитрĕмĕр. Майĕпен ытти культура çине куçма юрать. Хуçалăхăн çĕр çителĕклех, 300 гектара яхăн. Паллах, мĕн пур лаптăка акса-лартса хăварман, пусă çаврăнăшне тытса пыма тăрăшатпăр. Çĕрĕн те канмалла, – ĕмĕт-шухăшне палăртать çамрăк ертӳçĕ.

Малашне пахча çимĕç, çĕр улми упрама пысăкрах хранилище тума палăртать вăл. Ĕмĕтсем пысăк. Чи кирли – вĕсене пурнăçа кĕртме талпăнни. Хуçалăх çирĕп алла куçнишĕн чун-чĕререн савăнтăм. Эппин, ял пĕтмест-ха, малаллах аталанать. Вырăнта ĕç вырăнĕсем пулсан, вăхăтра шалу тӳлесен мĕншĕн пысăк укçа шыраса тĕнче касса çӳремелле?

**Лариса НИКИТИНА.**

# Пуринпе те вылякан Порошенко

**Нумаях пулмасть Петр Порошенко Украина президенчĕн постне йышăннăранпа 100 кун çитнине паллă турĕç.**

**Анăçран хĕç-пăшал тата Раççее хирĕçле санкцисем йышăнма ыйтнипе пĕрлех вăл хăйне миршĕн кĕрешекен çын пек кăтартать. Анчах Порошенко çĕр-шыва ертсе пынă малтанхи 3 уйăхра Украинăра чăн-чăн вăрçă кĕрлерĕ. Киев Донбаса пăхăнтарма хăтланчĕ. Çавна май пин-пин çын пурнăçĕ татăлчĕ, хуласемпе ялсем ишĕлчĕç. Тĕп командующий пулнă май унăн çакăншăн явап тытма тивĕ... Порошенко тытса пыракан политика ăнăçăвĕ е çухатăвĕ пирки хальхи вăхăтра экспертсем тавлашаççĕ.**



### Ахаль çемьеренех мар

Пулас президент Одесса облаçĕнче çуралнă, анчах Петр 7 çул тултарсан вĕсен çемйи Приднестровьери Бендер хулине куçса кайнă. Порошенко яланах хăй ахаль çемьерен тухнине, 90-мĕш çулсенче ашшĕпе амăшне «Бендертан пуля айĕнчен» илсе тухнине палăртать. Чăннипе вара унăн ашшĕ пирки ахаль çын теме çук. Тахçан вăл Молдави ССРĕн Бендерти тĕпчевпе юсав заводĕнче директорта ĕçленĕ. Алексей Порошенко пирки СССРти вăрттăн миллионерсенчен пĕри теççĕ. 1985 çул вĕçĕнче ăна тытса чарнă, 1986 çулта патшалăх пурлăхне чылай çаратнăшăн 5 çуллăха тĕрмене хупма, пурлăхне туртса илме йышăннă. 1987 çулта вăл амнистие лекнĕ. Алексей тата Петр Порошенкон официаллă биографийĕсенче çакăн çинчен калани тухса ӳкнĕ.

Ачалăх çулĕсенче Петр арçын ачасем хушшинче чаплă джинс шăлаварпа, хĕвелтен хӳтĕлекен куçлăхпа çӳренĕ. Ку вăл 70-мĕш çулсен вĕçĕнче! Унпа пĕрле вĕреннисем Порошенко дневникĕнче «пиллĕксем» кăна пулнине, хăйне тытассипе вара «виççĕрен» иртейменнине аса илеççĕ. Каччă чăркăш та усал, хăйĕнчен ирттерменнине палăрнă. Каярах çакă Аслă радăра та палăрнă. Депутатра ларнă чух вăл хĕрсех алăпа сулкалашнă. Сăмах май, ачаранах ăна дзюдо кăсăклантарнă. Ку енĕпе вăл спорт мастерĕн кандидатне çитнĕ.

Салтака кайма чĕнсе илсен вăл 4 прапорщикпа çапăçса кайнă, çавăншăн ăна службăна Казахстана янă. Çулталăкран вара килне çывăхарах куçарнă.

Президент çемйинче калаçма юратман тепĕр самант: аслă пиччĕшĕ Михаил вилни. Бендерта вăл бизнеспа ăнăçлă ĕçленĕ, ашшĕ пулăшмасăрах мар ĕнтĕ. Каярах «Укрпроминвест» компани йĕркелекенсенчен пĕри пулнă. Анчах 1997 çулта 40-ри М. Порошенко вилет. Официаллă верси тăрăх – автомобиль катастрофинче, чылайăшĕ вара ятарласа вĕлернĕ тет. Шăпах ашшĕпе аслă ывăлĕ бизнес-империне пуçаракансем, вĕсен ĕçне пула каярах кĕçĕн Порошенко Forbes журнал пичетлекен чи пуян çынсен спискне лекет. Приднестровьере контрабанда мелĕпе туяннă таварпа пуйса юлни ăна çĕрме пуяна кăларнă.



### Миллион-и? Тархасшăн

Порошенко карьера тума дипломат профессине суйласа илнĕ. Киеври чи чаплă университетра Грузин пулас президенчĕпе Михаил Саакашвилипе пĕр курсра вĕреннĕ. Халăхсен хутшăнăвĕсен факультечĕн деканатĕнче вĕрентекенсем аса илнĕ тăрăх – Порошенко студент чухне консалтинг компанийĕ шухăшласа кăларнă. Тавар тăвакансене, сутакансене тата туянакансене экономика, право ыйтăвĕсемпе консультаци парса предпринимательсенчен укçа пухнă. IV курс студенчĕ университета хăйĕн «Волгипе» çӳреме пуçланă.

Украина президенчĕн пирвайхи бизнесĕ пирки Саакашвили урăхларах пĕлтерет. Пĕр хаçата панă интервьюра вăл çапла каланă: «Горбачев перестройки пуçланиччен Порошенко видеосалон уçса хăйĕн бизнесне йĕркеленĕ. Анăç культурине кĕмелли майлă самант уçăлнине вăл питĕ хăвăрт ăнкарса илнĕ».

Пирвайхи миллион доллара Порошенко 1991 çулта, хăй сăмахĕсем тăрăх, хура пăрăç тумалли производствăн 4 процентне туянса ĕçлесе илнĕ. Хаксем ӳснĕ вăхăтра ăна Анăça сутнă. Çакăн хыççăн 90-мĕш çулсенче йӳнĕ хакпа фабрикăсем туянма пуçлать: Винницăри кондитер фабрикине, Луцкри автозавода... Сăмах май, вăл çулсенче ӳкерттернĕ сăн ӳкерчĕксенче Порошенко ылтăн шăлне кăтартса кулать – чухăн маррине пĕлтерекен паллă. 2000 çулсенче вара политик куллине чăлт шурă шăл илемлетет.

Хальхи вăхăтра ăна шоколад королĕ теççĕ. Çав вăхăтрах Порошенко конфет çимест – унăн сахăр диабечĕ. Вăл тытса тăракан «Рошен» империя ячĕ вара По-рошен-ко хушаматран, ăна арăмĕ Марина шухăшласа кăларнă. Студент çулĕсенчех пĕрлешнĕ вĕсем. Иккĕшĕ те пĕр тан шутланнă: Петĕрĕн ашшĕ – директор, çыхăнусем вăйлă, Марина вара – Украинăри сывлăх министрĕн çумĕн хĕрĕ.

### Бульдозерпа вирхĕнсе кĕнĕ

Укçапа влаç Порошенко çумне шоколад алла çыпăçнă пекех «çулăхнă». Çĕр-шыва Кучма, Ющенко, Янукович ертсе пынă çулсенче вăл обоймăра пулнă. Виçĕ хут депутат, икĕ хут министр (ют çĕр-шыв ĕçĕсен тата экономика), Совбез пуçлăхĕ... 2004 çулта пĕрремĕш майдан вăхăтĕнче вăл унччехи президентпа Виктор Ющенкопа туслашнă. Кумлашнă. Ющенко унăн кĕçĕн йĕкĕреш хĕр ачисене тытнă. Ун чухне Петр Алексеевич премьер пуканĕ çине ларассишĕн çуннă, анчах ку телее Юлия Тимошенко тивĕçнĕ. Тимошенко конкуренчĕ пирки: «Порошенко президент пӳлĕмне куççульпе чупса кĕчĕ», – тесе йĕкĕлтешнĕ. Ющенкопа кумлашни пур пĕрех сая кайман. Кучма вăхăтĕнче Порошенко тĕрлĕ оборудовани сутнă пек туса ют çĕр-шыва чылай тимĕр-тăмăр ăсатнă, хушăннă налука саплаштарма унăн кĕсйине бюджетран пĕр миллион кăна кĕмен. Ку тĕлĕшпе ĕç те пуçарнă. Анчах Ющенко вăхăтĕнче вăл каллех таса çын пулса юлнă.

2013 çулта декабрĕн 1-мĕшĕнче Порошенко майданра калаçма, Ленин броневик çине тăнă пек, бульдозер çине хăпарнă, çапла майпа вăл каллех политика вăййине таврăннă. Çур çултан вара чи пысăк должноçа тивĕçнĕ. Паян ăна пур енчен те сăхаççĕ, анчах президент пурне те килĕшме пултарни паллă. «Эпĕ шуррисемпе те, хурисемпе те выляма пултаратăп», – ăнлантарнă вăл пĕррехинче журналистсене хăй нихăçан та путманнине палăртса. Çапах та хальхи вăхăтра ун тавра мат лартас текенсем пит нумай, пуçран шахмат доскипех кĕрĕслеттерес текен те çук мар ара, хальхи политика вăййинче ятарлă йĕркесене пăхăнсах каймаççĕ вĕт...

# Йӳнĕ кредит кирлĕ-и?

**Раççее хирĕç санкци йышăннă çĕр-шывсенчен апат-çимĕç турттарма чарнăранпа уйăх иртрĕ. Хамăрăн ял хуçалăхне çĕклемелле тесе калаçнисĕр пуçне мĕн куратпăр-ха?**



Экспертсем нумай çуллăха паракан йӳнĕ кредит кирлĕ теççĕ. Пĕр çулта нимĕн туса ĕлкĕрме те çук, ял хуçалăхне укçа хывни сая каять-мĕн. Тупăшне 3-5 çултан кăна курма пулать иккен... Анчах туса илнĕ тавара халех вырнаçтарма кам чăрмантарать-ха? Уйăх каялла кăна тавар туса илекенсем пирĕн рынокра çурринчен те сахал пулнă, халĕ иртме те çук темелле. Апла хамăрăннисене нимĕнле программăсăрах, нумай çуллăха паракан йӳнĕ кредитсăрах çул пама пулать. Кăмăл çеç пултăр!

Тепĕр чух пирĕн помидор Турцирен кӳрсе килнинчен хаклăрах пулни урăх ыйту. Китай «нефчĕ» – çав тери йӳнĕ хакпа ĕçлекенсем пурри. Çавăнпа вĕсем темиçе пус тăракан купăста туса илсе эпир ӳстерекеннине хупласа хума пултараççĕ. Турци «нефчĕ» вара – помидор, çырла тата çăнăх. Вĕсене туса илме май пур таран укçа тата вăй уйăраççĕ.

Çавăнпах çак çĕр-шывсем Раççей рынокне талккăшĕпе йышăнса пыраççĕ. Пирĕн ял хуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе вăтăр ытла патшалăх программи йышăннă. Анчах Раççей ял хуçалăх министерстви аграри политикине тытса пырас вырăнне укçа валеçессипе ĕçлет. Америкăра, калăпăр, фермер тулă акас тет. Ун патне ял хуçалăх министерствин специалисчĕсем пырса çапла калаççĕ:

– Тулă кирлĕ мар, ыраш акмалла.

– Мĕншĕн? Иртнĕ çул пит лайăх туса илтĕмçке. Мĕн чухлĕ тупăш куртăм, – тет фермер.

– Çапах та кăçал ыраш ак. Тупăшу чакасран сана хушса тӳлĕпĕр, – ĕнентереççĕ ăна специалистсем.

Мĕншĕн тесен вĕсем ку тăрăхри фермерсем иртнĕ çул тулă лайăх туса илнине, вăл темиçе çула та çитессе лайăх пĕлеççĕ. Малалла та çавнах аксан хак вылясса, ăна туса илекен вара çухату тӳсессе курса тăраççĕ. Çавăнпа та патшалăх ыран пĕтĕмпех çухатиччен паян йӳнĕрех, анчах кирлĕ тырăшăн кăшт хушса тӳлет. Çакă ĕнтĕ вăл аграри политики.

Санкци йышăниччен Раççейре кайăк-кĕшĕк ашĕпе чăх çăмарти туса илекенсем ыттисемпе тупăшма пултарнипе, конкурентлăхĕпе палăрнă. Мĕн улшăнчĕ-ха? Вĕсем халĕ рынока пĕтĕмпех тултарса лартрĕç те хака тăруках ӳстерсе ячĕç. Харăсах икĕ мулкач тытасшăн: вырăнĕ те кирлĕ, хакĕ те пысăк пултăр. Çакăншăн вĕсене нумай çуллăх йӳнĕ кредит памалла-и?!

**Раççей хаçат-журналĕ тăрăх Елена НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

# Шупашкарта – утакансен кунĕ

ШУПАШКАР 2014

**Юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче, "Раççей – спорт çĕр-шывĕ" форум уçăлнă кун, Шупашкарта утакансен Пĕтĕм тĕнчери кунĕ иртĕ.**

Утакансен кунĕ – Пĕтĕм тĕнчери "ТАФИСА" спорт ассоциацийĕ йĕркелекен тĕп мероприятисенчен пĕри. Унăн тĕллевĕ – çынсене хăвăрт утакансен спортне явăçтарасси, сывă пурнăç йĕркине пăхăнма вĕрентесси. Çулсерен çак ăмăрту 150 çĕр-шывра иртет, унта 12 млн çын хутшăнать. Раççейре утакансен кунне "Спорт – пурин валли те" физкультурăпа спорт общественне йĕркелеме шаннă. Çакнашкал мероприяти пирĕн çĕр-шывра пĕрремĕш хут пулĕ. Чăваш Ен тĕп хулинчи старта 15 пин ытла çын тухмалла. Республикăри паллă атлетсем ертсе пынипе вĕсем залив тавра çаврăнĕç.

**Чыс-хисеп**

# Тăван ялăм савăнать...

Вăрçă çулăмĕ витĕр тухнисен, тылра ĕçленисен йышĕ чаксах пырать. Пурăннă чух хакламалла хисеплĕ те пултарулă çыннăмăрсене. Ватă çынна нумай кирлĕ-и? Ăшă сăмах вĕсемшĕн темрен те пахарах.

Çапла шухăшласа хамăн аннен (çўлти патшалăхра çўретĕр!) аппăшĕн черетлĕ çуралнă кунне ял-йышпа иртерес терĕм. Карпова Мария Петровна 91 çул каялла Вăрнар районĕнчи Кушар-Юнтапа ялĕнче пысăк çемьере çуралнă. Вун тăхăр çулхи хĕре çар комиссариачĕ повесткăпа Шупашкарти завода фронт валли çар хатĕрĕсем тунă çĕре ĕçлеме янă. Çавăнтанпа вăл тĕп хулара пурăнать. Тăван ялĕпе кăсăклансасах тăрать. Хăйне лайăх туять, пурне те ас тăвать ырă кăмăллă кинемей. «Хула хыççăн ялти сывлăш калама çук таса пек туйăнать. Урамри лаштра йăмрасем, автан каçăхса авăтни, йытă-кушак курăнни – пурте ачалăха аса илтереççĕ. Шел, этем ĕмĕрĕ куç хупса иличчен иртсе каять...» – аса илӳ ăшне путрĕ Маюк аппа тăван тăрăха çитсен. Икĕ сыпăкри 87 çулти йăмăкĕ Татьяна Андреева, пĕр класра вĕреннĕ Агреппина Ксенофонтова тус-юлташĕ ăшшăн кĕтсе илчĕç ăна.

Шăмат кун культура çуртне халăх чылай пухăнчĕ. Выранти фольклор ушкăнĕ Мария Карпова, ялти ытти ватă ячĕпе хаваслă юрă-кĕвĕ шăрантарчĕ. Тахçанах ялти сцена çинчен чăваш юррине илтмен Маюк аппан куçĕ шывланчĕ. Концерт вĕçленсен тыл ветеранĕ пурне те ырă-сывă пурăнма вăй-хăват пиллерĕ. «Ырра шанни, лайăх кăмăлпа пурăнни маншăн чи паха эмел, тен, çавăнпа нумай пурăнатăп. Пĕр-пĕрне усал сунмасăр килĕштерсе пурăнăр», – терĕ вăл ял-йыша чĕререн ырă сунса. Ватă çыннăн кашни сăмахне тăваллăн алă çупса йышăнчĕ пуçтарăннă халăх. Уяв кĕреки сĕтел хушшинче малалла тăсăлчĕ.

Уява уяв пек ирттерме кашни тăрăшнă. Юрă-ташă ушкăнне ăста ертсе пыракан Александрпа Татьяна Ивановсем хисепе тивĕçлĕ. «Чăваш халăхĕ мĕн ĕлĕкрен юрланă. Ĕçĕ нумай пулсан та юрă-ташă валли вăхăт тупатех ял çынни. Пирĕн яла Галина Краснова ăста юрăçă куçса килни савăнтарать. Пире вăл тĕрĕс юрлама хăнăхтарать», – хавхаланса калаçать чăн чăваш чунлă Александр. Галина Анатольевна 8 ача амăшĕ, 9 мăнук унăн. Анчахрах Новосибирск хулинче иртнĕ фестивальте дипломант ятне çĕнсе илнĕ, республикăри Ираида Вдовина ячĕпе ирттернĕ конкурсра 2-мĕш вырăна тухнă.

Надежда Сергеевăсăр та юрă-ташă уявĕ иртмест. «Упăшкам лайăх. Алли ылтăн. Телейлĕ хĕрарăм эпĕ», – ăшă кулăпа çиçет çамрăк хĕрарăм сăнĕ.

Пилĕкшер ача çуратса ӳстернĕ Нина Капитоновăпа Светлана Артемьева та пур çĕре те ĕлкĕреççĕ: юрлама та, ĕçлеме те. Владислав Яковлевпа Николай Леонтьев яла пурăнма таврăнни савăнтарать. Ял хуçалăх институтне пĕтернĕ Владислав подполковника çитнĕ, Николай нумай çул вара Элĕкре врач-анестезиолог пулса ĕçленĕ. Вĕсем халĕ тивĕçлĕ канура, ял пурнăçĕшĕн питĕ тăрăшаççĕ.

«Мĕнлерех маттур санăн мăшăру Алена: çаврăнăçуллă, ĕçчен, еплерех илемлĕ юрлать», – тетĕп Сергей Крылова хавхалантарса.

«Мĕншĕн эсир арăмсене кăна мухтатăр? Кăçал çĕнĕ пӳрт çĕклерĕмĕр. Хăш чух ĕçĕ нумай, арăмăн юрлама каймалла. Нихăçан та чарса тăман, юрă-ташă савăнăç кӳрет-çке», – мăнаçлăн калаçать виçĕ ача ашшĕ.

Ял пусĕнчи илемлĕ кил-çуртра Волковсен çемйи пурăнать. Надьăпа Ольгăсăр пĕр уяв та иртмест. Надежда пирки çуралсанах юрласа янă пулĕ теме те пулать. Йăмăкĕ Ольга вара апат-çимĕç хатĕрлессипе, чечек юратнипе, тирпейлĕхĕпе тĕлĕнтерет. Клуба пынă кашни ватă çынна хăй ӳстернĕ илемлĕ чечек çыххи парнелесе савăнтарчĕ.

«Атте балалайка, хут купăс калатă, анне юрланă. Тен, çавăнпах юрласситашласси, кал-кал ĕçлесси пирĕн юнра. Салтакран килсен атте Мускавран купăс çыранса илчĕ. Çавăнтанпа алран яман ăна», – калаçăва хутшăнать правур та вашават Владимир Коновалов. Хĕлле вăл йĕлтĕр сырать, çулла Атăлта ишет, çуран чупать.

Геннадий Шестаков та ырă ята тивĕç. Пĕлтерӳ çырасси, стена хаçачĕ ӳкересси – ун алли витĕр шăрçаланса тухать. Шкулта вĕреннĕ чух туптаннă ăсталăхĕ паянхи кун та манăçман.

Ялти библиотекăра ĕçлекен Алена Спиридонова аллинче музыка инструменчĕсем чĕррĕн, тасан янăраççĕ. Ал ĕç маçтăрĕ вăл. Ырă кăмăлĕпе, хастарлăхĕпе, çынлăхĕпе уйрăлса тăрать.

Кашни ашшĕ-амăшĕ пысăк чыса тивĕç тесе шухăшлатăп эпĕ. Вĕсен те Маюк аппанни пек уявсем пулччăр, чунтан хĕпĕртемелле пултăр.

**Надежда НАЛИМОВА-ЧУДАКОВА,**
**Вăрнар районĕ.**

| КĂЛАРĂМСЕМ | ИНДЕКС | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
|---|---|---|---|---|---|
| Хыпар | ВД800 | 703,86 | 288 | 279 | 144 |
| Хыпар | В8353 | 286,08 | 150 | 141 | 90 |
| Самраксен хаçачĕ | ВД804 | 329,28 | 234 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | В1515 | 296,88 | 222 | 213 | 141 |
| Сывлăх | В1524 | 188,82 | 114 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | В4806 | 167,88 | 114 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | В4838 | 353,82 | 168 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси. Кил | В3887 | 167,88 | 108 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | В1529 | 279,48 | 252 | 246 | 198 |
| Капкăн | В4608 | 163,44 | 150 | 126 | 108 |
| Лик | В3429 | 120,36 | 120 | 120 | 100 |
| Вести Чувашии | В4807 | 269,28 | 192 | 186 | 144 |
| Собрание законодательства Чувашской Республики | В4847 | 629,58 | 660 | 660 | 570 |
| Тантăш | В4802 | 256,08 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | В3208 | 157,02 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте | В3771 | 125,52 | 114 | 111 | 90 |

## АВĂН, 25 – ЮПА, 4

***Çак тапхăрта «Хыпар» Издательство çурчĕн пур кăларăмне те Раççей почтин кашни уйрăмĕнчех ӳнĕрех хакпа çырăнтараççĕ. Васкăр, укçăра перекетлĕр!***

*Çур çула е çулталăка 400 тенкĕрен ытла хаçат-журнал çырăннисем Раççей почти ирттерекен лотерея вылявне хутшăнма пултарĕç.*

## ЧĂВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВĔН ЭРНЕЛĔХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, юпа уйăхĕн 6-мĕшĕ**
7.00 «УТРЕННЯЯ ЗАРЯДКА» (0+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЫЛТĂН ÇЎПÇЕРЕН» (6+)
19.00 «ТУСЛĂХ ЙЫВĂÇĔ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ТАКИЕ ЖЕ» (12+)
20.30 «АКИЛБУПСЕР» (6+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Ытлари кун, юпа уйăхĕн 7-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЫЛТĂН ÇЎПÇЕРЕН» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
7.00 «УТРЕННЯЯ ЗАРЯДКА» (0+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
20.30 «ТРИ ЖЕЛАНИЯ» К 3-ЛЕТИЮ НАЦИОНАЛЬНОГО ТЕЛЕВИДЕНИЯ ЧУВАШИИ (12+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА

**Юн кун, юпа уйăхĕн 8-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
7.00 «УТРЕННЯЯ ЗАРЯДКА» (0+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
18.45 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (0+)
19.00 «КАÇХИ ТĔЛ ПУЛУ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
20.30 «СПОРТ ДЛЯ ВСЕХ» (6+)
21.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
21.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Кĕçнерни кун, юпа уйăхĕн 9-мĕшĕ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ХЫПАРСЕН КĂЛАРĂМĔ
6.15 «ЯЛАН ЯНРА, ЧĂВАШ СĂМАХĔ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
7.00 «УТРЕННЯЯ ЗАРЯДКА» (0+)
10.00 «РОССИЯ – СПОРТИВНАЯ ДЕРЖАВА». ПРЯМАЯ ТАНСЛЯЦИЯ С КРАСНОЙ ПЛОЩАДИ Г. ЧЕБОКСАРЫ
18.30 «АВАН-И» (12+)
18.45 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
19.00 «РОССИЯ – СПОРТИВНАЯ ДЕРЖАВА» (6+)
20.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
20.30 «МЕСТНОЕ САМОУПРАВЛЕНИЕ» (12+)
21.00 «НА ОЛИМПЕ» (6+)
21.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
21.30 «РОССИЯ – СПОРТИВНАЯ ДЕРЖАВА». ДНЕВНИК ФОРУМА (6+)

**Эрне кун, юпа уйăхĕн 10-мĕшĕ**
6.00 «НА ОЛИМПЕ» (6+)
6.15 «ТĔПЛĔ КАЛАÇУ» (12+)
6.30 «РОССИЯ – СПОРТИВНАЯ ДЕРЖАВА». ДНЕВНИК ФОРУМА (6+)
8.00 «УТРЕННЯЯ ЗАРЯДКА» (0+)
18.30 «РАÇÇЕЙ – СПОРТ ÇĔР-ШЫВĔ». ФОРУМ ДНЕВНИКĔ (6+)
18.45 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
19.00 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
19.30 «РОССИЯ – СПОРТИВНАЯ ДЕРЖАВА». ДНЕВНИК ФОРУМА (6+)
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «ТРИ ЖЕЛАНИЯ» К 3-ЛЕТИЮ НАЦИОНАЛЬНОГО ТЕЛЕВИДЕНИЯ ЧУВАШИИ (12+)
20.30 «НАОБУМ» (12+)
20.45 «ПОШЕПТУШКИ» (0+)
21.15 «РАÇÇЕЙ – СПОРТ ÇĔР-ШЫВĔ». ФОРУМ ДНЕВНИКĔ (6+)
21.30 «РОССИЯ – СПОРТИВНАЯ ДЕРЖАВА». ДНЕВНИК ФОРУМА (6+)
21.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)

**Шăмат кун, юпа уйăхĕн 11-мĕшĕ**
6.00 «РАÇÇЕЙ – СПОРТ ÇĔР-ШЫВĔ». ФОРУМ ДНЕВНИКĔ (6+)
6.15 «ЧĂВАШ ХАЛĂХ ЮМАХĔСЕМ» (0+)
6.30 «РОССИЯ – СПОРТИВНАЯ ДЕРЖАВА». ДНЕВНИК ФОРУМА (6+)
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
9.00 «ВРЕМЯ ВКУСА» (6+)
9.30 «ХРАМ НОВОМУЧЕННИКОВ И ИСПОВЕДНИКОВ РОССИЙСКИХ. Г. ЧЕБОКСАРЫ» (6+)
10.00 «ПОПУГАЙЛĂ ХĔРАРĂМ». ЧĂВАШЛА КУÇАРНĂ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «ТРИ ЖЕЛАНИЯ» К 3-ЛЕТИЮ НАЦИОНАЛЬНОГО ТЕЛЕВИДЕНИЯ ЧУВАШИИ (12+)
18.30 «РАÇÇЕЙ – СПОРТ ÇĔР-ШЫВĔ». ФОРУМ ДНЕВНИКĔ (6+)
19.00 «ÇĔР ТИВЛЕЧĔ» (12+)
19.30 «РОССИЯ – СПОРТИВНАЯ ДЕРЖАВА». ДНЕВНИК ФОРУМА (6+)

**Вырсарни кун, юпа уйăхĕн 12-мĕшĕ**
9.00 «НА ОЛИМПЕ» (6+)
9.30 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
10.00 «РОССИЯ – СПОРТИВНАЯ ДЕРЖАВА». ДНЕВНИК ФОРУМА (6+)
17.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
17.30 «КОМФОРТНЫЙ ГОРОД» (12+)
18.00 «БУМЕРАНГ» (12+)
18.30 «КИЛ ĂШШИ» (12+)
19.00 «ПЕХИЛ» (12+)
19.30 «ПИРĔН ПУРНĂÇ ХĂТЛĂХРА». П. ОСИПОВ. ДРАМА (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Юпа, 1 – юн кун | Юпа, 2 – кĕçнерни кун | Юпа, 3 – эрне кун | Юпа, 4 – шăмат кун | Юпа, 5 – вырсарни кун | Юпа, 6 – тунти кун | Юпа, 7 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 6.53 | 6.55 | 6.57 | 6.59 | 7.01 | 7.03 | 7.05 |
| | анать | 18.26 | 18.24 | 18.21 | 18.18 | 18.16 | 18.13 | 18.11 |
| Кун тăршшĕ | | 11.33 | 11.29 | 11.24 | 11.19 | 11.15 | 11.10 | 11.06 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать | тулса пырать |
| | кунĕ | 7-мĕш кун | 8-мĕш кун | 9-мĕш кун | 10-мĕш кун | 11-мĕш кун | 12-мĕш кун | 13-мĕш кун |
| | (12 сехет тĕлне) | Ту качаки паллинче | Ту качаки паллинче | Шыв тăкан паллинче | Шыв тăкан паллинче | Шыв тăкан паллинче | Пулă паллинче | Пулă паллинче |

## КĂМĂЛ ТУРАМ – ПĔР ТУРАМ

# Юрлакан чĕре тата чун

**Мĕншĕн чуна çывăх, мĕншĕн килĕшеççĕ пире Юрий Жуковăн лирикăллă юррисем? Çепĕçлĕхĕпе, тасалăхĕпе тата тирпейлĕхĕпе. Ытарайми ĕлккенлĕхĕпе, чĕрене çемçен сĕртĕнекен çемĕсемпе тыткăнлаççĕ вĕсем. Юрăсенче ырă савăнăçпа çăмăл куляну, йăваш эрлĕхпе телейлĕ хĕпĕртев, ÿкĕнÿ çеç айккинче тăрса юлать. Сăмахĕсенче те, кĕввинче те çут çанталăк ÿкерчĕкĕсем, тăван тавралăхри ялсем, вăрмансемпе уй-хирсен, вĕтĕ-вĕтĕ хумлă юхан шывсемпе шăнкăр-шăнкăр çăл куçсен тĕрри-эрешĕ палăрса тăрать: пĕр чарăнми юрлас килет!**

Светлана Асаматăн "Тăван кил ăшши", Игорь Майковăн "Лартрăм чечексем эп çуркунне", Василий Прохоровăн "Вăй выляççĕ шевлесем", Юрий Сементерĕн "Шăнкăр-шăнкăр çăл куç", Ольга Тимофеевăн "Авăтать куккук", Лидия Туктинан "Вĕçсе кайсассăн кайăксем" сăввисемпе çырнă юрăсем радиопа телекурав передачисенче час-часах пулаççĕ.

Юрий Нестерович Жуков 1950 çулхи ака уйăхĕн 17-мĕшĕнче Етĕрне районĕнчи Янăм ялĕнче çуралнă. Пысăк çемьере ултă ывăлпа пĕр хĕр ача çитĕннĕ. Ялти сакăр çул вĕренмелли шкулти виççĕмĕш класа çÿренĕ чухнех вăл хут купăспа чăваш ташшин кĕввине калама пĕлнĕ. Çĕпĕрте шахтăра ĕçленĕ аслă пиччĕшĕ Микула ăна пĕр сăмахсăрах çĕнĕ купăс туянса парать. Икĕ çул та иртмест, Шупашкарти пир-авăр комбинатĕнче ĕçлекен тепĕр пиччĕшĕ Геннадий баян парнелет. Юра ачаранах кĕвĕ-çемĕ ăнкарăвĕ вăйлă пулнипе палăрнă: кирек мĕнле кĕвве те пĕрре илтнипех калама пултарнă. Чирĕккассинчи вăтам шкулта вĕреннĕ çулсенче вăл ачасен пултарулăх ушкăнне хăех ертсе пынă, районти смотрсенче яланах çĕнтернĕ. Нотăсем те вулană, сăвăсем çырнă...

Юрий Жуковпа эпĕ 1967 çулхи чÿк уйăхĕн вĕçĕнче паллашнăччĕ. Вниçĕ çул Совет Çарĕнче хĕсметре пулнă хыççăн Шупашкара, Чăваш педагогика институтне вĕренме таврăнтăм. Хулара университет уçăлнă, пирĕн историпе филологи факультетне унта куçарнă иккен. Çапла эпĕ университетра вырăс тата чăваш чĕлхипе литератури уйрăмĕн 2-мĕш курсĕнче вĕренме пуçларăм.

Студентсен пурнăçĕ – савăнăçлă вăхăт. Пĕрле вĕренекенсем пурте çамрăксем, пĕри те çарта пулман. Пурте маттур, пултаруллă, лайăх вĕренеççĕ. Занятисем хыççăн репетици пухăнаççĕ, концерта хатĕрленеççĕ, юрлаççĕ-ташлаççĕ. Баянисчĕ – пединститут студенчĕ Юрий Жуков пулнĕ. Вăл пирĕн ушкăна хăй ирĕкĕпе пулăшма килĕшнĕ иккен. Пĕрре тĕл пулсанах манăн сасса тĕрĕслесе пăхрĕ, тÿрех юрлакансен ретне тăратрĕ.

Çĕнĕ çул уявĕнче юрлама çар юрри те суйласа илчĕç. Пуçларăмăр юрлама. Хамăр та сисетпĕр, уçăмлă тухмасть. Чылайăшĕ сăмахĕсене те пĕлмест. Баянист юрă вĕрентме те ăста иккен. Пачах тарăхмасть, йăл кулса илет, тăсать те тăсать баяна.

Малтан эпир салтаксем пек вырăнта утса юрларăмăр, вĕренсе çитсен малалла хускалса кайрăмăр. Сехет те иртмерĕ, юрă çав тери селĕм янăрама тытăнчĕ. Коридорта иртсе çÿрекенсем пирĕн аудитори алăкĕ умĕнче чарăнса тăраççĕ, тĕлĕннипе пуçĕсене пăркалаççĕ.

Нихçан ывăнма пĕлмен баянист ертсе пынипе пирĕн хор Шупашкарти клубсемпе общежитисенче, тĕрлĕ районти ялсенче концертсем кăтартрĕ. Мĕн тери пысăк пуçарулăх! Пĕррехинче Чăваш патшалăх университечĕн акт залĕнче студентсен юрри-ташшине пăхакансен хушшинче Чăваш халăх поэтне Петĕр Хусанкая асăрхасан, пĕтĕм чун-чĕререн савăннăччĕ эпир. Сцена çинчех пăшăл пăтти пĕçерме пуçларăмăр.

Хăйĕн "Чечеке ларсассăн çĕмĕрт" пĕрремĕш юррине те Юрий Жуков çав çулсенче кĕвĕленĕччĕ. Сăввине пирĕн ушкăнра вĕренекен Элĕк каччи Егор Ярдыков çырчĕ. Илемлĕ юрă.

1971 çулта пулас композитор пединститутăн музыкăпа педагогика факультетĕнчен вĕренсе тухать, çара каять. Салтаксен юрăпа ташă ансамблĕне ертсе пырать.

Çулталăкран Юрий Нестерович çартан таврăнать, Етĕрне хулинчи шкулсенче ĕçлет. 1973 çулта Муркаш салине куçса каять, ачасен музыка шкулĕнче ĕçе кÿлĕнет. Виçĕ çултан вăл кунти вăтам шкулта музыка учителĕнче ĕçлеме пуçлать, учительсемпе вĕренекенсен тата Культура çуртĕнчи пултарулăх коллективĕсене ертсе пырать. Вĕсем районти халăх пултарулăхĕн фестивалĕсемпе смотрĕсенче çуллен малти вырăнсене йышăнаççĕ. Культура çурчĕн "Шурăмпуç" юрăпа ташă халăх ансамблĕ республикăри халăх пултарулăхĕн 2-мĕш телефестивалĕн лауреачĕ ятне тивĕçет.

Юрий Жуков пĕрремĕш юрă çырнăранпах кĕвĕ-çемĕ тĕнчинче пурăнать, çĕнĕрен çĕнĕ юрăсем кĕвĕлет. Паллă сăвăçсемпе туслашать, çепĕç сăмахсемлĕ те тарăн шухăшлă сăвăсен суйлать. Юррисене халăх умне кăларма васкамасть, чунне хытарса улăштарать, эреветлĕ çаврăмсем кĕртет. 1980 çулсем вĕçĕнче кăна вăл хăйĕн пирвайхи хайлавĕсене паллă юрăçсене парать. "Чечеке ларсассăн çĕмĕрт" юррине те чи малтан Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕн юрăçисем Светлана Бубновăпа Римма Шикирова пысăк сцена çинчен шăрантараççĕ.



– Сăвă килĕшрĕ пулсан илемлĕ юрă çуралать, – хăйĕн вăрттăнлăхне уçать Юрий Нестерович. – Тарăн шухăшпа пурнăçри, çут çанталăкри ÿкерчĕксем пысăк пĕлтерĕшлĕ. Юрă халăх чунне тыткăнлатăр, ăна йышăнтăр, юрлама пуçлатăр. Кĕвĕри çĕнĕлле çаврăмсем те эреветлĕ туйăмсем вăратчăр.

Иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче пирĕн артистсен репертуарĕнче атте çинчен пĕр юрă та çукчĕ. Çакăн пирки Лидия Туктина сăвăçпа калаçрăм. Чăн та, вăл манпа килĕшрĕ. Эрне те иртмерĕ, мана "Аттене чунра упратăп" сăвă çырса та пачĕ. Эпĕ те çанă тавăрсах ĕçе кÿлĕнтĕм. Тепĕр эрнерен ăна Виталий Петров юрăçă чăваш халăхĕ патне çитерчĕ. Шухăша яракан юрă пулчĕ. Тата иккĕшĕ те ашшĕсене пĕчĕкле, пиллĕкре çухатнă-мĕн...

Иртнĕ ĕмĕрти тăхăр вуннăмĕш çулсенче Юрий Жуков çырнă "Юратнă, кăмăллă аннем", "Тавах сире, атте-аннем", "Хĕрарăм куççулĕ", "Чунăма ан хускат", "Çамрăк ĕмĕр пĕрре çеç килет", "Мана çеç парнеле", "Пурнăç çулĕ такăр мар" юрăсене чăваш тĕнчинче пур çĕрте те юрлама пуçлаççĕ. Вĕсем уçă та çепĕç лирикăллă, ирĕк сывлăшпа шăранаççĕ. Композитор хăйĕн юррисенче пултарулăхĕнчи чи лайăх енĕсене аталантарать. Вĕсем чăваш халăхĕн юратнă юррисем пулса тăчĕç.

"Юрий Жуков композиторăн пултарулăхĕ чăвашсен музыка культуринче паллă вырăн йышăнать, – хак парать ЧР композиторĕсен ассоциацийĕн ертÿçи Николай Зимин музыковед. – Чăннипех юрлакан чĕре тата чун. Кăмăла хускатакан юрăсем парнелет тăван халăха". Хавхалантаракан сăмахсем ĕнтĕ. Вĕсем халăх юррисем евĕр пулса кайнă та пирĕнпе юнашар пыраççĕ, халĕ эпир юрлатпăр, каярахпа ачасемпе мăнуксем шăрантарĕç. Çапла пултăр!

Композиторăн канăçсăр ĕçĕ çинчен те темиçе сăмах калассăм килет.

Шăнкăр-шăнкăр çăл куç,<br>
Кăмăла эс ан хуç<br>
Çурхи кас кĕввине каласа...

Юрий Сементер сăввипе çырнă çак юрра Чăваш Енре çирĕм çул ытла юрлаççĕ ĕнтĕ. Илĕртÿллĕ кĕвĕ, асра юлакан сăмахсем.

"Сăвва çыртăм та пĕр эрне хушшинче Филипп Лукина, Виктор Ходяшева, Тимофей Фандеева – пурĕ çичĕ композитора кăтартрăм, – аса илет халĕ Юрий Семенович. – Ăнсăртран урамра Юрий Жуков тĕл пулчĕ. – Шăкăл-шăкăл калаçса кайрăмăр хайхи. Калаçу вĕçĕнче вăл манăн пĕр-пĕр сăвăпа юрă çырас кăмăлĕ пурри çинчен пĕлтерчĕ. Эпĕ ăна пĕр сăмахсăрах çак сăвва тыттартăм. Тĕлĕнмелле ăслă-тăнлă йĕкĕт иккен! Йывăç сулхăнне пăрăнса кĕрсе, сăвă йĕркисене тимлĕ вуласа тухрĕ те мана тав турĕ.

Хăйне евĕр композитор вăл. Хăйĕн сасси. Сăвăç мĕн калас тенине тÿрех тавçăрса илнĕ-çке-ха. Çĕр каça çывăрман, юрă кĕвĕленĕ. Тепĕр кунхине ирхине Муркашран каллех Шупашкара килнĕ, Зоя Лисицина юрăça шыраса тупнă. Çапла "Шăнкăр-шăнкăр çăл куç" Чăваш Енре хăйĕн сассине пачĕ. Ун хыççăн унпа "Йăл кулсам, савниçĕм" тата ытти юрăсем çыртăмăр.

Юрий Жуков – ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, учитель-методист. Вăл 200 ытла юрă кĕвĕленĕ, вĕсем пурте тенĕ пекех Чăваш радио фондĕнче упранаççĕ. 2006 çултанпа Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче унăн юррисемпе илемлетнĕ В.Лекановăн "Юратсан юрлас килет" спектаклĕ кăтартрĕç. Халĕ Юрий Нестерович районти пĕрлештернĕ хора ертсе пырать тата Муркашри культура çуртĕнчи ветерансен хорĕн илемлĕх ертÿçи. Кăçал хор районти пур яла та çитме ĕлкĕрнĕ. Çĕнĕ юрăсем те кĕвĕлет. Çыру сĕтелĕ çинче Петр Михайловăн "Телей пăрăнчĕ манран", Лидия Туктинан "Çеçпĕл çеçкисем", Игорь Майковăн "Эп çухатрăм сана" сăввисем выртаççĕ. Шанас килет: илемлĕ юрăсем пулĕç. Турă пулăштăр, юлташăм!

**Герман ЖЕЛТУХИН.**

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 1.10 | 2.10 |
|---|---|---|---|
| Температура, $^0$С | 2–4 сехетре | +3 | +2 |
| | 14–16 сехетре | +7 | +5 |
| Çумăр çăвать | | | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 747 | 751 |


## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРÿСЕМ

### ПРОДАЮ

**6. Песок,** гравмассу, чернозем, **торф,** щебень, **бой кирпича** с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**23. Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Доставка. Тел. 89061355241.

**550. Гравмассу, песок** речной, **щебень.** Доставка. Т.: 89176500385, 89603073399.

**583. Гравмассу, песок, торф, щебень.** Т. 89050282225.

**618. КОПАЛКИ,** сортировки, **ПЛУГИ, дискаторы, разбрасыватели**. Дешево. Доставка! Т. 8-937-955-98-02.

### СДАЕМ В АРЕНДУ

АУ «Издательский дом «Хыпар» предоставляет в аренду помещения на 6 и 7 этажах здания редакционно-издательского корпуса, расположенного по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, д. 13, для использования под офис.

По всем вопросам обращаться в 616 каб. или звонить по тел. 8-967-478-06-12, 56-00-67.



«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР ТИВĔÇĔСЕНЕ ПУРНĂÇЛАКАН – Г. А. МАКСИМОВ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305[1] регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă.
Заказ 3715
Тираж 4578

* Рекламăпа пĕлтерÿсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерÿсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.